ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 4 ЭРНЕКУН № 3 (8655)

Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

«Чăвашвăрман» трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятисенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем тата колхозниксем Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне янă çыру (1 стр.).

ПРОПАГАНДИСТСЕНЕ ПУЛĂШМА. В. Яковлев.—Сталин юлташ социализмла нацисем çинчен вĕрентни (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. М. Кузьмин.—Комсомол вăйĕ—парти ертсе пынинче (2 стр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче (2 стр.).

С. Аслан.—Канаш МТС-ĕ ялхуçалăх ĕçĕсене çителĕксĕр пурнăçлать (3 стр.).

Валентин Урдаш. — Вăрман паттăрĕсем. Очерк (3 стр.).

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. И. Волков.—Çуракине хатĕрленес ĕçе ертсе пымалла (3 стр.).

П. Чугунов.—Чăваш республикинчи бобр заповеднникĕсем (3 стр.).

И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани пирки урăх çĕршывсенче мĕн калаççĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене çӳлĕ пусăмра ирттерер

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче колхоз строй̆ĕ тата пысăкрах çитĕнӳсем турĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă колхозсен уй-хирĕсенче çĕнĕ те хăватлă техникăпа ĕçлесси нумай ӳсрĕ. Ăнса пулнă тырпула колхозсем вăхăтра пухса кĕртрĕç, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕç. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те иртнĕ çул пысăк çитĕнӳ тунă.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх, хуçалăх çулĕ вĕçленнĕ хыççăн колхоз правленийĕ колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çулталăкри ĕçсем çинчен отчет туса пама тивĕçлĕ. Артель правленине суйланăранпа икĕ çул иртнĕ пулсан, отчет итлесе çирĕплетнĕ хыççăн, çав пухурах артель правленине суйлаççĕ. Çапла вара, колхозсенчи отчетлă пухусем тата отчетпа суйлав пухăвĕсем хуçалăхлă-политикăллă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăраççĕ. Çулталăкри ĕçсем çинчен тунă отчета колхозниксен пухăвĕнче тĕплĕ сӳтсе явни, артелĕн ертсе пыракан органне пултаруллă та шанчăклă çынсем суйлани, колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла татах çирĕплетсе пыма, колхозниксен производствăллă активлăхне ӳстерме, ситес çул тата лайăхрах ĕçлеме май туса парать.

ВКП(б) Чăваш обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ республикăра колхоз производствине аталантарас ĕçре техникăпа тата ĕç вăй̆ĕпе ку таранччен çителĕксĕр усă курнине тата ытти çитменлĕхсене кăтартса пачĕ. Çав çитменлĕхсене пĕтерес шутпа правлени халиччен мĕн тунă тата малалла мĕн тума шутлать,— отчета сӳтсе явнă чухне çак ыйтусем тĕп вырăнта пулмалла. Вырăнти парти организацийĕсен правлени отчетне сӳтсе явас ĕçре чи малтанах колхозниксен активлăхне ӳстерме тăрăшмалла, пухусенче çитменлĕхсене критикăлассине вăйлатса пымалла. Тырпул тухăçне ӳстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас тата государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ыйтусем колхозниксен пухăвĕнче тĕп вырăнта тăмалла.

Правлени отчетне сӳтсе явас ĕçе активлă хутшăннине колхозниксем çĕрĕç культурине малалла лайăхлатмалли майсене тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли меслетсене кăтартса паччăр, ĕç дисциплинине вăйлатмалли мерăсене палăртса хăварччăр. Хăшпĕр колхозсенче машинăсемпе тата ĕç хатĕрĕсемпе кирлĕ пек усă курса ĕçлеменни халĕ те пĕтмен. Колхоз пурлăхĕпе тĕрĕс усă курманни çинчен калакан фактсем те пур. Колхозниксен отчетлă пухăвĕсенче çавăн пек çитменлĕхсене уççăн палăртни малашне вăл çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерме пулăшмалла.

Ялхуçалăх органĕсен колхозсенче отчетлă тата отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме тивĕçлĕ пулăшу памалла. Вĕсен чи малтанах отчетсене тĕрĕс çырма, пухусем пуличчен ревизи тăвас ĕçе лайăх йĕркелеме колхоз правленийĕсене тата ревизи комиссийĕсене пулăшмалла. Правлени отчечĕ тăрăх МТС-сем мĕнле ĕçлени çинчен те сăмах хускатмалла. Çавăнпа МТС директорĕсен е МТС-сенчи ытти работниксен кашни пухурах пулмалла.

Отчетлă пуху тата отчетпа суйлав пухăвĕ вăл колхоз пурнăçĕнче чи пысăк ыйтусене татса пама пухăнакан пухусем. Çав пухусенче мĕнпур колхоз членĕсенчен 2/3 пайĕнчен кая мар пулмалла. Анчах та вак колхозсем пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн хăшпĕр çĕрте хĕлле пысăк йышлă пуху ирттерме йывăртарах пулать. Çавна шута илсе райсовет исполкомĕсен пухусене хăш колхозра мĕнле ирттерме май пуррине малтанах кăтартса парас пулать. Отчета сӳтсе явас ĕçе тата суйлава хутшăннисĕн йышĕ Уставра кăтартса панă хисепрен кая нихăш колхозра та пулмалла мар.

Иртнĕ çул колхоз председательне тата артель правленийĕпе ревизи комиссийĕн членĕсене суйланă чухне хăшпĕр çĕрте колхоз демократине пăснисем пулкаланă. Кăçал çавăн пек çитменлĕхсем пачах пулмалла мар. Правлени членĕсене, уйрăмах колхоз председательне суйланă чухне малтан тĕплĕ тишкерсе сӳтсе явни кирлĕ. Колхоза ертсе пыма суйланакан çын политика енчен те, ĕçри пултарулăх енчен те шанчăклă çын пулма кирлĕ.

Вак колхозсем пĕрлешсе пысăкланнипе колхозсем чăн-чăн шултра хуçалăхсем пулса тăчĕç. Шултра хуçалăха ертсе пырас ĕç чылай кăткăсрах. Çавăнпа сахал мар колхозсенче колхоз председателĕ пулса колхоза ертсе пыма ялхуçалăх специалисчĕсене е ялхуçалăх ĕçне лайăх пĕлекен практиксене суйланă. Колхоз строительствинчи опыт—çапла туни тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕ.

«Колхозра хĕрарăмсем—пысăк вăй», тенĕ Сталин юлташ. Çав сăмахсем питĕ тĕрĕссине колхоз строй̆ĕ уççăн кăтартса пачĕ. Хĕрарăмсем хушшинчен колхоз производствин пултаруллă организаторĕсем нумай ӳсрĕç. Анчах хĕрарăмсем хăйсен ĕçри пултарулăхĕпе арçынсенчен пĕре те кая юлмассĕ пулин те, колхозсене ертсе пырас вырăнсенче хĕрарăмсем халлĕхе питĕ сахал-ха. Колхоз председателĕ пулма е правлени членĕсем пулма суйланă чухне хĕрарăмсене хакламанни пулмалла мар.

Партипе правительство республика ялхуçалăхĕ умне лартнă малашнехи задачăсем питех те пысăк. Çитес ик-виç çул хушшинче тырпул тухăçне гектартан 18 центнертан кая мар туса илмелле, çавăн пекех обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăça чылай ӳстермелле. Колхозсем умне лартнă çавăн пек ответлă задачăсене пурнăçлама колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилеме пултаракан руководительсем кирлĕ. Колхоз пухăвĕсенче колхозниксем колхоз умĕнче тăракан ответлă задачăсене хăвăртрах пурнăçлама мĕн-мĕн тума кирлине пур енчен те кăтартса памалла, палăртнă мерăсене пĕтĕмпех пурнăça кĕртсе пыма артель правленине хушса хăвармалла.

Январь уйăхĕнчен пуçланса февралĕн 10-мĕшне çитиччен республикăри кашни колхозрах отчетлă пухусем е отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртмелле. Çак политикăллă тата хуçалăхлă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе тĕплĕн хатĕрленсе, колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене çӳлĕ пусăмра ирттерер!

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 24-мĕш томне грузинла пичетлесе кăларнă

ТБИЛИСИ, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Грузин ССР-ĕнчи государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен 24-мĕш томне грузинла пичетлесе кăларнă.

Ăна вырăсларан грузин чĕлхи çине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн Грузири филиалĕ куçарса хатĕрленĕ.

И. В. Сталин произведенийĕсен уйрăм кĕнекисем

Государствăн политикăллă литература издательстви И. В. Сталин ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Центральнăй Контрольнăй Комиссин пĕрлехи пленумĕнче 1933 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче «Пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн итогĕсем» çинчен тунă доклада уйрăм кĕнеке туса кăларнă.

И. В. Сталин «Хĕрлĕ Çарăн виçĕ уйрăмлăхĕ çинчен» калана сăмаха та уйрăм кĕнеке туса пичетленĕ.

Ку кĕнекесене И. В. Сталин Сочиненийĕсенчи текстсем тăрăх пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Плана срокчен тултарнă

КУСЛАВККА. Районти промышленность предприятийĕсем çĕнĕ çула производство планне ирттерсе тултарнипе кĕтсе илчĕç. Иртнĕ çулхи программăна тултарни çинчен чи малтан чул кăларакан тата известь тăвакан предприяти, пристань тата механически арман коллективĕсем пĕлтерчĕç. Вĕсем хыççăн райпромкомбинат, «Комсомолец», «Прогресс», М. Горький ячĕпе тăракан промартельсен, сăкăр завочĕн, апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕсем çулталăкри производство планне ирттерсе тултарни çинчен пĕлтерчĕç.

Районти промышленность предприятийĕсем халĕ 1952 çулхи пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Экзаменсем пуçланчĕç

Чăваш педагогика институтĕнчи студентсем, пур предметсемпе те зачетсем парса пĕтерни хыççăн, экзаменсем тытма пуçларĕç.

Çак кунсенче 3-мĕш курсри студентсем шкул гигиенипе экзамен пачĕç. Экзамен студентсем çак предмета аван пĕлнине кăтартрĕ, нумай студентсем «отлично» тата «хорошо» паллăсем илчĕç, япăх паллăсем çук.

РСФСР Вăрман промышленность министерствин „Чăвашвăрман" трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятисенче ĕçлекен рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен, служащисенчен тата колхозниксенчен

Мускав, Кремль.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович! Эпир Сирĕн патра çак çырăва пирĕн совет халăхĕ, мухтавлă большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Эсир генилле ертсе пынипе коммунизм тунă, хамăр çĕршыв çутçанталăкне улăштарса çĕнетмелли гигантла гидростанцисем, каналсемпе шăвармалли системăсем тунă вăхăтра çыратпăр. Эпир çакна ăнланатпăр: Эсир совет халăхĕ умне кăларса тăратнă историллĕ тĕллевсене мĕнпур отраслĕсем, халăх хуçалăхĕн мĕнпур ĕçченĕсем пĕр тикĕс ĕçлесен кăна ăнăçлă пурнăçлама пулать.

Аслă строительство ĕçĕсен планне тултарас ĕçре вăрман промышленноçĕ пысăк вырăн йышăнать, эпир, çак промышленность работникĕсем, «Чăвашвăрман» трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсенче ĕçлекен колхозниксем çакна ăнланса, 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарма, çапла тунипе коммунизм строительствин пĕтĕмĕш ĕçне, социализмлă государство хăватне малалла тĕреклетес ĕçе, пĕтĕм тĕнчипе мир туса хурассишĕн кĕрешес ĕçе хамăр вăя пама тăрăшатпăр.

Партипе правительство тата Эсир, хаклă Сталин юлташ, куллен атте пек тăрăшнипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе пирĕн республикăн халăх хуçалăхĕ тĕпрен улшăнчĕ, вăрман промышленноçĕн сăн-сăпачĕ улшăнчĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн вăрман хатĕрлекен предприятисенче автомобильсемпе пăравуссем, трелевочнăй тракторсемпе лебедкăсем, куçса çӳрекен электростанцисемпе тиемелли механизмсем нумай ĕçлеççĕ. Çакă çĕнĕ техникăна пире Тăван çĕршыв ытлăн-çитлĕн парса тăрать, пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме, Чăваш çĕршывĕн вăрман пуянлăхĕсемпе ытларах лайăх усă курма кирлĕ мĕнпур условисене туса парать.

Пирĕн республикăри вăрман промышленность работникĕсем Эсир, хаклă Сталин юлташ, хăйсен культурăпа йăла условисене лайăхлатассишĕн тăрăшнине куллен туйса тăраççĕ. Ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе тӳлемелле туни рабочисен ĕç укçине нумай ӳстерме май пачĕ. Çакă вăл партипе правительство вăрман промышленность работникĕсем çине тимлĕ пăхнине тата тепĕр хут кăтартса парать.

Пирĕншĕн çакăн пек тăрăшнăшăн Сире, Сталин юлташ, пысăк спасибо! Пирĕншĕн тăрăшнăшăн эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, вăрман хатĕрлемелли государство планне срокчен тултарма пулатпăр.

Кăçалхи кĕркуннепе хĕллехи вăрман хатĕрлемелли сезон пирĕн республикăра иртнĕ çулхинчен чылай лайăхрах пуçланчĕ. Пирĕн вăрманпромхозсен ӳссе тĕрекленнĕ кадрĕсем çĕнĕ техникăна ăнăçлă çĕнсе илсе унпа усă курас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кире вăрманпромхозĕнчи паллă тракторист, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Сысуйкин юлташ сезонра 10 пин кубометртан кая мар йывăç çул хĕррине илсе тухма пулнă. Унтан Кире вăрманпромхозĕнчи Иван Боронин трактористпа Алтышево вăрманпромхозĕнчи Николай Вильдяев тракторист тата ыттисем те пример илчĕç. Хăйĕн обязательствисене пурнăçласа, Сысуйкин юлташ октябрь уйăхĕнче 1.700 кубометр, сменăра 120 кубометр таран йывăç çул хĕррине илсе кăларчĕ. Боронин юлташ октябрь уйăхĕнче 1.195 кубометр, Вильдяев юлташ—1.469 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухрĕç. Вăрнар вăрманпромхозĕнчи Петр Осипов шофер октябрь уйăхĕнче 512 кубометр йывăç турттарса кăларчĕ, çакă вăл ĕç нормине 280 процент тултарни пулать. Буински вăрманпромхозĕнчи электропăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен Царегородцев юлташ, Улатăр вăрманпромхозĕнчи крановщик Друзин юлташ, вăрман промышленноçĕнчи тата ытти нумай механизаторсем те сменăри ĕç нормине кунтан-кун ирттерсе тултараççĕ, çĕнĕ техникăпа усă курас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Кăçал республикăри колхозсем, Вăрнарпа Калинино районĕсенчи колхозниксенчен пример илсе, сезон планне срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Шăмăршă районĕнчи «Правда» колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли сезон планне срокчен тултарчĕç. Муркаш районĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе кăлармалли сезонри плана срокчен—Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарнă тĕле пурнăçларĕ. Çавăн пек колхозсен хисепĕ Чăваш республикинче кунтан-кун ӳссе пырать.

Анчах эпир республикăри вăрман промышленноçĕн ĕçне лайăхлатмалли майсемпе кирлĕ пек усă кураймастпăр-ха. Пирĕн вăрманпромхозсенче механизмсене пурне те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттерей̆меççĕ-ха, ĕç нормине тултарман рабочисем те пур.

Тăван çĕршыв интересĕсем пире çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, йывăç касса хатĕрлемелли, ăна çул хĕррине илсе тухмалли тата турттарса кăлармалли ĕçсен хăвăртлăхне пур майсемпе те ӳстерме хушаççĕ. Эпир Сире, Иосиф Виссарионович, уйăхран-уйăха лайăхрах ĕçлеме шантарса калатпăр, коммунизмăн аслă стройкисем валли, Мускаври нумай хутлă çуртсен строительстви валли, шахтăсем валли тата промышленноçăн ытти отраслĕсем валли паха йывăç вăхăтра парса тăма сăмах паратпăр.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир, РСФСР Вăрман промышленность министерствин «Чăвашвăрман» трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем тата колхозниксем çакăн пек обязательство йышăнатпăр:

1. 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонра вăрман хатĕрлемелли плана «Чăвашвăрман» трест тăрăх мартăн 15-мĕшĕ тĕлне—çирĕплетсе панă срокран икĕ эрне маларах тултаратпăр, çĕршыв халăх хуçалăхне сезон вĕçленичченех планран ирттерсе 100 пин кубометр йывăç паратпăр.

2. Вăрман хатĕрлес ĕçе лайăхлатса ĕçе юрăхлă йывăç планра палăртнинчен 10 процент ытларах кăларма пулатпăр.

3. Ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 102 процент тултаратпăр.

4. Йывăç хатĕрлемелли техникăпа туллин усă курса тата механизмсене эксплуатацилес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе сезон вăхăтĕнче списокри кашни механизма çакăн чухлĕ ĕçлеттермелле тăватпăр:

ПЭС-12 электростанципе йывăç касса хатĕрлес енĕпе—105 процент;

КТ-12 тракторпа çул хĕррине илсе тухас енĕпе—105 процент;

ТЛ-3 лебедкăпа çул хĕррине илсе тухас енĕпе—102 процент;

Ансăр чугун çул çинче ĕçлекен пăравус енĕпе—108 процент;

Автомашинăпа турттарса кăларас енĕпе—103 процент;

Кранпа тиес енĕпе—110 процент.

5. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсен йăлапа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлататпăр. Хĕрлĕ кĕтессен шутне ӳстеретпĕр, хĕрлĕ кĕтессемпе клубсене оборудовани хушса паратпăр, рабочисем пурăнакан поселоксене радио кĕртетпĕр, вăрман предприятийĕсенче столовăйсемпе магазинсен шутне ӳстеретпĕр, медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлататпăр.

Эпир Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, çапла шантарса калатпăр: çак обязательствăсене тултарма эпир хамăр вăйсене шеллесе тăмăпăр, çак хисеплĕ задачăсене пурнăçлама хамăрăн мĕнпур резервсемпе майсене мобилизацилĕпĕр. Механизмсемпе лайăхрах усă курассишĕн, поток тата комплекслă механизаци меслечĕсене ĕçе кĕртессишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, производствăри çухатусене пĕтерессишĕн, 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонра йывăç хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва тата анлăрах саратпăр.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, тĕнчери мĕнпур ĕçсыннисен ырлăхĕшĕн нумай çулсем хушши пурăнма пĕтĕм чĕререн сывлăх сунатпăр.

Сывă пултăр аслă Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ—хамăр çĕршыври халăхсен туслăхĕпе мухтавĕн çирĕплĕхĕ, пĕтĕм тĕнчери никам çĕнтерейми мир тĕревĕ!

Сывă пултăр коммунистсен аслă партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ, совет халăхĕн кĕрешӳсенче туптанса çирĕпленнĕ авангарчĕ, пирĕн çĕнтерӳсен хавхалантаракан тата организаторĕ!

Хамăрăн çулпуçăмăрпа учителĕмĕрĕ, аслă Сталина—мухтав!

Çырăва РСФСР Вăрман промышленность министерствин «Чăвашвăрман» трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен тата колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе явса йышăннă.

Çулталăк планне ирттерсе тултарнă

Вăрнар вăрманпромхоз коллективĕ 1951 çул пуçламăшĕнче йышăннă социализмлă обязательствăна чыслă пурнăçларĕ. Вăрманпромхоз çулталăкри планран ирттерсе 22 пин кубометр, вăл шутра ĕçе юрăхлă йывăç 16 пин кубометр турттарса кăларчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 6 процент чакарчĕ, пĕр миллион тенкĕ ытла тупăш турĕ.

Норма тăрăх ПЭС-12-200 электростанци хăвачĕпе çулталăкра 12 пин кубометр йывăç касса хатĕрлемелле. Пуян техникăпа лайăх усă курассишĕн ăмăртса ĕçлесе, К. Леонтьев механик ертсе пыракан электростанци коллективĕ 19,2 пин кубометр, Ф. Никифоров механик ертсе пыракан коллектив—21,5 пин кубометр йывăç касса хатĕрлерĕç. Коммунист П. Осипов шофер 2.750 кубометр вырăнне 5.200 кубометр йывăç турттарса кăларчĕ.

Плана ăнăçлă тултарма вăрманпромхоза Вăрнарпа Калинино районĕсенчи колхозниксем нумай пулăшрĕç. Вăрнар районĕнчи Ленин ячĕпе тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпе тултарчĕç.

Вăрманпромхоз коллективĕ, колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе, 1951 çулхи тăваттăмĕш квартал планне ирттерсе тултарчĕ, 1952 çулхи пĕрремĕш квартал шучĕпе 25 пин кубометр йывăç касса хатĕрлерĕ, 12 пин кубометр çул хĕррине илсе тухрĕ, 11 пин кубометр турттарса кăларчĕ.

Коллектив 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонта вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн, Тăван çĕршыва йывăç ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн кĕрешет.

Вăрнар вăрманпромхоз директорĕ **Ф. ВАСИЛЬЕВ,**
Партбюро секретарĕ **Н. КУДРЯШОВ,**
Рабочком председателĕ **Ф. ВАСИЛЬЕВ.**

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

1. Шăмăршă районĕнчи **«Правда» колхоз** (председателĕ **В. Кошкин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Куликов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Н. Атникеев** юлташ). Колхоз 1951 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,5 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,1 процент, турттарса кăлармалли плана 100,3 процент тултарнă.

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

2. **«Красное Сормово» колхоз** (председателĕ **А. Моисеев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Ершов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,8 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 127 процент тултарнă.

3. **Энгельс ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Ильин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Орлов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 108 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 119,7 процент тултарнă.

4. **Жданов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Т. Тимофеев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Тимофеев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 120,3 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,3 процент тултарнă.

5. **«Труд» колхоз** (председателĕ **П. Семенов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **З. Новикова** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,2 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 110,1 процент тултарнă.

6. **«Правда» колхоз** (председателĕ **Г. Евдокимов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Ф. Павлов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100,5 процент тултарнă.

7. **«Сталинец» колхоз** (председателĕ **В. Мартынов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Т. Сергеев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,1 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 110,6 процент тултарнă.

8. **«Ударник» колхоз** (председателĕ **Н. Павлов** юлташ, парторганизаци секретарĕ **И. Игнатьев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,6 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 128,1 процент тултарнă.

Кашни колхозăн плана тултармалла

Калинино районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем вăрман хатĕрлемелли плана çултан-çул ирттерсе тултараççĕ. Ку сезонра та вĕсем лайăх ĕçлерĕç. Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне колхоз йывăç турттарса кăлармалли плана тултарчĕ. Çитес кунсенче йывăç касса хатĕрлемелли плана та тултарать.

«1-ое Мая» колхозри лавçăсем Мускаври нумай хутлă çуртсем валли юман турттараççĕ. Хисеплĕ заказа вĕсем пысăк хавaслăхпа пурнăçласа пыраççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхоз руководителĕсем государство заданине вăхăтра тултарас тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз юлашки тăватă сезонта Тăван çĕршыва йывăç хатĕрлесе памалли плана тултарман. Кăçалхи сезонта та ку колхоз юлса пырать. Колхоз председателĕ Емельянов юлташ йывăç турттарма лавсем çителĕклĕ уйăрса ямасть.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ лавçăсене ертсе пыма ответлă çын уйăрман. Хăшпĕр лавçăсем, государство валли йывăç турттарасран пăрăнса, нимĕне каяççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозран кидисем ĕçе япăх организациленĕ. Вĕсем çын пуçне кунне 0,40 кубометр çеç касса хатĕрлеççĕ. Чылай колхозниксен пăчкăпа пуртă çителĕклĕ мар. Колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕк пулнăшăн вăрман участокĕсенчи мастерсем те айăплă. Вĕсем колхозниксене ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, инструментсемпе лайăх усă курма вĕрентмеççĕ, малта пыракансен опычĕпе паллаштармаççĕ.

Йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлас тесен районти колхозсен пурин те вăрмана ĕç вăйĕпе лавсем графикра палăртнă чухлĕ уйăрса ямалла. Вăрманпромхоз руководителĕсем колхозниксене йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлама лайăх майсем туса памалла. Стахановла вăйăкунлăх иртнĕ хыççăн хăшпĕр колхозсем йывăç хатĕрлес, уйрăмах йывăç турттарас ĕçе палăрмаллах вăйсăрлатрĕç. Çак çитменлĕхе çитес кунсенчех пĕтермелле.

Н. ДЕНИСОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомол вăйĕ—парти ертсе пынинче

Коммунистсен партийĕ тата Сталин юлташ тăрăшнипе комсомол ўссе çирĕпленчĕ, партин чи çывăх помощникĕ тата боевой резервĕ пулса тăчĕ.

Халĕ, совет халăхĕ пысăк çĕкленўпе коммунизм строительствин сталинла программине пурнăçланă вăхăтра, çамрăксене коммунистла воспитани парас ĕçре комсомол ролĕ калама çук ўсрĕ. Комсомол хăй умĕнче тăракан пысăк задачăсене парти организацийĕсем куллен ертсе пырсан кăна ăнăçлă пурнăçлама пултарать. Комсомол вăйĕ—парти ертсе пынинче.

ВКП(б) Елчĕк райкомĕ çамрăксене воспитани парас, комсомол организацийĕсен активлăхĕпе ĕçлĕхне ўстерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăвать. ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче те, пуçламăш парторганизацисен пухăвĕсенче те комсомола ертсе пырас ыйтусене час-часах сўтсе явассĕ, конкретлă решенисем йышăнса, вĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрассĕ, комсомол организацийĕсен секретарĕсен отчечĕсене итлессĕ.

ВЛКСМ райкомĕ иртерекен пленумсенче яланах райком секретарĕсем, райком пайĕсен заведующийĕсем пулассĕ. Райком пуçарăвĕпе комсомол организацисене ертсе пырас ĕçри практикăна тишкерсе тухнă. Ун хыççăн комсомолăн ертсе пыракан работникĕсемпе канашлу иртерне. Канашлу пуличчен чылай комсомол организацийĕсен ĕçĕсене райком работникĕсем вырăна кайса тĕрĕсленĕ.

Комсомол организацисен ĕçне лайăхлатас тата комсомол организацисене ертсе пырассине вăйлатас тĕллевпе комсомол организацисен тата пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен пĕрлехи канашлăвне иртертĕмĕр. Çак канашлу Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пулса иртрĕ. Калас пулать, малта пыракан колхозри парти тата комсомол организацийĕсен ĕçĕсемпе паллашни пысăк усă пачĕ.

Парторганизацисем куллен ертсе пынă çĕрте комсомол организацийĕсем яланах паха тĕслĕхсем кăтартассĕ. Иртнĕ çулсенче «Новый путь» колхозри комсомол организацийĕ питĕ начар ĕçленĕ. Кунта пухусем сайра хутра кăна иртерне, комсомолецсем хушшинче дисциплина япăхса кайнă, вĕсенчен чылайăшĕ колхоз производствинче ĕолса пынă. Комсомол организацийĕ ўсмен.

Колхоз кўршĕри «Красное знамя» колхозпа пĕрлешнĕ хыççăн ўнти комсомол организацийĕсем те пĕрлешрĕç. Парторганизаци хăйĕн пухăвĕсенче комсомол ĕçĕ çинчен час-часах сўтсе явма пуçларĕ. Парторганизаци секретарĕ комсомол организацийĕн секретарьне куллен пулăшма тытăнчĕ. Коммунистсем те час-часах çамрăксемпе политика ыйтăвĕсем тăрăх каласусем иртерессĕ.

Халĕ «Красное знамя» колхозри комсомол организацийĕ лайăх ĕçлекен организацисенчен пĕри пулса тăчĕ. Яланах план тăрăх иртерекен пухусене комсомолецсем активлă хутшăнассĕ. Комсомол организацийĕн çамрăксем хушшинчи влиянийĕ ўсрĕ. Колхозра малта пыракан çамрăксене 1950 çулхинчен икĕ хут ытла комсомола илнĕ. Хальхи вăхăтра ку организацире 40 комсомолец ытла. Вĕсенчен нумайăшĕ колхозри ответлă участоксенче ĕçлет. Комсомолецсем колхоз производствинче малта пырассĕ. Кашни комсомолец ĕç нормине иртерсе тултарать. Массăллă тата обществăллă-политикăллă ĕçре те комсомолецсем хăйсен пуçарулăхне анлă палăртассĕ. Вĕсем хăйсен политикăллă пĕлўлĕхне ўстерес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлессĕ.

Комсомол активĕн, уйрăмах комсомол организаци секретарĕсен идейăллă пĕлўлĕхне ўстересси калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Çак ĕç çине ВКП(б) райкомĕ тата парторганизацисем тимлĕ пăхассĕ. Комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕсенче, семинарĕсенче, комсомол активĕн пухăвĕсенче парти работникĕсем докладсемпе лекцисем туса парассĕ. Комсомол работникĕсене партипе правительство решенийĕсем çинчен, район умĕнче тăракан задачăсем çинчен тăтăшах калаçатпăр, ĕçре конкретлă пулăшу пама тăрăшатпăр.

Хальхи вăхăтра районти комсомол организацийĕнче 50 кружок тата политшкул ĕçлессĕ. Вĕсенче 1.272 комсомолецпа союзра тăман çамрăк ССР Союзĕн государство тытăмне, ВЛКСМ уставне, ВКП(б) историне тата çулпуççен биографийĕсене вĕренессĕ. Кунсăр пуçне 215 комсомолеца парти вĕренĕвне хутшăнтарнă, 96 комсомолец марксистлă-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренет. Комсомолăн ертсе пыракан работникĕсем каçхи партшкулта вĕренессĕ.

ВКП(б) райкомĕ комсомол вĕренĕвне ертсе пыма коммунистсенчен 18 пропагандист уйăрчĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе юратса туса пырассĕ. «Марс» колхозри кружока Р. Хасянов юлташ ертсе пырать. Вăл занятисене лайăх хатĕрленсе, идея тĕлĕшĕнчен çўлĕ пусăмра иртерет. Кружокра 18 комсомолец вĕренет. Вĕсем пурте занятисене лайăх хатĕрленсе пырассĕ, сиктермесĕр çўрессĕ.

Çĕнĕ çул умĕн ВКП(б) райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Унта комсомол райкомĕн ĕçĕсем çинчен ВЛКСМ райком секретарĕн А. Бобылева юлташăн докладне сўтсе явнă. Пленум районти комсомол организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Пленум членĕсем тата пленумра пулнă пуçламăш парторганизаци секретарĕсем çав çитменлĕхсем мĕнрен килнине палăртса, вĕсене мĕнле майпа пĕтермеллине уççăн кăтартса пачĕç.

Пленум комсомол организацисене организацине политика тĕлĕшĕнчен тĕреклетсе пымаллине, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен политикăллă пĕлўлĕхне вĕçĕмсĕр ўстерсе пымаллине палăртса, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Çамрăксене воспитани парас ĕçре библиотекăсем, клубсем, вулав çурчĕсем, кино, стадионсем пысăк вырăн йышăнассĕ. Анчах парти организацийĕсем çаксемпе çителĕклĕ усă курмассĕ. Крахмалпа патока заводĕнчи комсомол организацийĕ клубпа библиотека ĕçĕсемпе пачах интересленмест. Пуçламăш парторганизаци те çакна асăрхамасть. Çавна пулах ĕнтĕ заводри клубра докладсемпе лекцисем сайра хутра кăна пулассĕ. Районти клубра вара ку тĕлĕшпе ĕçсем питех те начар.

Комсомол организацийĕсен, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен пултарулăхне куллен вăйлатса пыни кирлĕ. Пирĕн районти нумай çамрăксем колхоз производствинче паха ĕçсем пуçарса пырассĕ. Анчах ВЛКСМ райкомĕ, унăн секретарĕсем, çавăн пекех комсомол организацийĕсен секретарĕсем çамрăксен пуçарăвĕсем çинчен пуçламăш парторганизацисем е ВКП(б) райкомĕ умне вăхăтра ыйту лартмассĕ. ВКП(б) райкомĕн пленумĕ çамрăксен лайăх пуçарăвĕсене ырласа, пуçланă ĕçе ăнăçлă вĕçлесе çитерес тĕлĕшпе пулăшса пыма кирлине палăртрĕ.

Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене воспитани парас ĕçе кирлĕ пек хакламассĕ. Çавăн пек парторганизацисем комсомола пулăшу парас, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăрас вырăнне парти пухăвĕсенче отчетсем итленипех çырлахассĕ. Пухусенче отчетсем итлессĕ пулсан та, ăна та ячĕшĕн çеç, малтан комсомол ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пĕлмесĕрех сўтсе явассĕ. «Новая жизнь» колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕ, парти пухăвĕнче сўтсе явнă хыççăн та, нимĕн чухлĕ те лайăхланманни çавăн çинчен калать те ĕнтĕ. «Новая жизнь» колхозри пуçламăш парторганизаци комсомол организацисене ĕçре пулăшас вырăнне ячĕшĕн решенисем йышăннипе лăпланса ларать.

ВКП(б) райкомĕ, пуçламăш парторганизацисем комсомола мĕнле ертсе пынине тĕрĕслес тĕллевпе, ялти организацисене ятарласа парти активне ярать. Вĕсем вырăнта пулса комсомол ĕçне тĕрĕсленипе кăна лăпланмассĕ, парти организацийĕсемпе комсомол организацийĕсене тивĕçлĕ пулăшу парассĕ.

Комсомол организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртерни çамрăксен политикăллă тата производствăллă активлăхне ўстерчĕ. «Автогигант» колхозри тата Курнавăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти комсомол организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсене иртерме ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекен М. Смирнова юлташа ятăмăр. Унпа пĕрле отчетпа суйлав пухăвĕсенче пуçламăш парторганизаци секретарĕсем те пулнă. Комсомол организацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çўлĕ пусăмра, большевикла критикăпа самокритикăна анлă сарса янă никĕс çинче пулса иртнĕ. Пухусем комсомол организацийĕсен ĕçĕсенчи пысăк çитменлĕхсене палăртса, çав çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелли мерăсем йышăннă, комсомол организацисене ертсе пыма ĕçре пиçĕхнĕ, хастарлă комсомолецсене суйланă.

Парти райкомĕ, комсомола ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем хутшăннине шута илсе, çав кадрсене комсомол ĕçĕпе паллаштарма, ертсе пырас ĕçĕн меслетне вĕрентме тăрăшать.

М. КУЗЬМИН,
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Кĕскен

КАНАШ. Вăтапуç ялповĕ тавар çаврăнăш планне уйăхран уйăха, кварталтан квартала иртерсе тултарать. Ялпо коллективĕ çĕнĕ çула çулталăкри таварçаврăнăш планне чылай иртерсе тултарнипе, планран иртерсе 200 пин тенкĕлĕх тавар сутнипе кĕтсе илчĕ.

ЧУРАЧĂК. Киров ячĕпе тăракан колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн хытă тăрăшать. Виçĕ çуллăх плана пур енĕпе те иртерсе тултарнă. Колхозăн пилĕк ферма пур, вĕсенче 115 сысна, 60 ĕне, 111 хур, 229 чăх усрассĕ. Колхоз хĕле лайăх хатĕрленнĕ, пур витесене те юсанă. Çамрăк выльăхсем валли çĕнĕ вите тунă.

МУРКАШ. Стал[ин ячĕ]пе тăракан колхозри А. Столбов [юлта]ш ертсе пыракан бригада иртнĕ çул кашни гектартан 9,26-шар центнер сĕт-кантăр туса илнĕ.

Государствăна панă сўсшĕн колхоз 50 пин тенкĕ укçа, 175 центнер тулă, темиçе центнер кантăр çăвĕ илчĕ.

Колхозниксем çитес çулхи пысăк тухăçлă сўс-кантăршăн кĕрешессĕ. Кантăр акмалли участок çине тислĕк, торф турттарассĕ.

ШĂХАСАН. Ленин ячĕпе тăракан колхоз хĕрсех çуракине хатĕрленет. Вăрлăхсене те тасатса хунă. Колхозниксем 250 гектар çинче юр тытса хăварчĕç. Хире 3.300 лав тислĕк, 200 тонна торф кăларчĕç, 40 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç, 60 тонна минераллă удобренисем турттарса килчĕç.

Киев облаçĕнчи Катеринопольски МТС—Украинăри малта пыракан МТС-сенчен пĕри. МТС коллективĕ тракторсене узловой меслетпе юсать. Çапла ĕçленĕ май тракторсене юсама ларакан хак 15 процент чакнă, ĕç тухăçлăхĕ 30—50 процент ўснĕ. Мастерскойра иртнĕ çулсенчи 60 çын вырăнне 40 çын ĕçлессĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: юсанă тракторсене тĕрĕслесе пăхассĕ.

Н. КРЫЛОВ фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕ пулнă.

Чăваш АССР-ĕнче халăх сучĕсене суйлани çинчен ыйту пăхса тухса, Президиум суйлавсем политикăллă пысăк çĕкленўпе иртнине, суйлавçăсен активлăхĕпе организацилĕхĕ пысăк пулнине палăртнă.

Республикăра халăх сучĕсене суйлас ĕçе пĕтĕм суйлавçăсенчен 99,96 проценчĕ хутшăннă. Халăх судьисене суйлама тăратнă кандидатсемшĕн пĕтĕм суйлавçăсенчен 99,05 проценчĕ сасăланă, халăх заседателĕсене суйлама тăратнă кандидатсемшĕн 99,96 процент сасăланă.

Халăх сучĕсен суйлавĕсем мĕнпур суйлав округĕсенче пулса иртнĕ. Пĕтĕмпе 51 халăх судьи тата 3.466 халăх заседателĕ суйланнă. Халăх судьине тата халăх заседателĕсене суйланисем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсем.

Халăх судьисем хушшинче хĕрарăмсем 5 çын, партире тăманнисем—1, халиччен халăх судьисем пулса ĕçленисем—37, Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланисем—43, вырăссем—13, чăвашсем—36, тутарсем—1, мордвасем—1.

Халăх заседателĕсем хушшинче хĕрарăмсем 43,3 процент, ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсем 46,9 процент, халиччен халăх заседателĕсем пулнисем 45,8 процент, Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланисем 70,7 процент, чăвашсем 68,4 процент, вырăссем 27,1 процент, ытти национальность çынисем (мордвасем, тутарсем, украинецсем, белоруссем, латышсем, марийцсем, удмуртсем)—4,5 процент.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ халăх сучĕсен суйлавĕн итогĕсене çирĕплетсе, Чăваш АССР Юстици министерствине, ĕçсынни депутачĕсен район тата хула Совет исполкомĕсене суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене пĕтĕçтерме, вĕсене пурнăçа кĕртме кирлĕ ĕçсем туса иртерме хушнă.

Чăваш АССР Конституцийĕн 110-мĕш статьине пурнăçлани çинчен Президиум çавăн пекех тата ĕçсынни депутачĕсен Хĕрлĕ Чутай райсовет исполком председателĕн Осипов юлташ докладне итленĕ. Президиум Хĕрлĕ Чутай районĕнче Чăваш АССР Конституцийĕн 110-мĕш статьине начар пурнăçланине палăртнă. Район Совечĕпе ял Совечĕсен депутачĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен тата ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçĕсем çинчен суйлавçăсем умĕнче отчетсем сахал тăвассĕ.

Ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ депутатсене Советсен практикăллă ĕçне хутшăнтарасси çине кирлĕ пек пăхман, вĕсене яланхи комиссисене кирлĕ пек хутшăнтармассĕ, уйрăм поручениcем сахал парассĕ, вĕсен активлăхне хăпартмассĕ.

1951 çулта райсовет исполкомĕ сессисене ултă хутчен пухас вырăнне тăватă хутчен çеç пухнă. Район Совечĕн малтанхи сессийĕнче уйăрнă 7 яланхи комиссирен ялхуçалăх комиссийĕпе бюджет комиссийĕсем кăна ĕçлессĕ, ытти 5 яланхи комисси ку таранах çитсе те ĕçе тытăнман.

Райсовет исполкомĕ депутатсене пухса пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарас тĕлĕшпе канашлусем иртермест. Райсовет исполкомĕ сумĕнче иртнĕ çулсенче ĕçлесе тăнă депутатсен пулĕмне 1951 çулта хупнă.

Верховнăй Совет Президиумĕ ĕççынни депутачĕсен Хĕрлĕ Чутай райсовет исполком председательне Осипов юлташа Чăваш АССР Конституцийĕн 110-мĕш статьине район тата ял Совечĕсен депутачĕсем енчен пурнăçа кĕртмелле тума тата депутатсене кашни сесси хыççăн суйлавçăсем умĕнче отчет тăвас ĕçе йĕркелеме хушнă.

Пропагандистсене пулăшма

СТАЛИН ЮЛТАШ СОЦИАЛИЗМЛА НАЦИСЕМ ÇИНЧЕН ВĔРЕНТНИ

Наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе Сталин юлташ сахал мар классикăллă произведенисем çырнă. Ахальтен мар ăна Ленин наци ыйтăвне пуринчен те лайăхрах пĕлекен марксист, тесе шутланă. Сталин юлташ наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе çырнă кĕнекесем хушшинче унăн «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» ятлă произведенийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл Сталин юлташăн Сочиненийĕсен вуннпĕрмĕш томĕнче пирвайхи хут пичетленсе тухнă.

«Наци ыйтăвĕ тата ленинизм», ятлă произведенире Сталин юлташ совет стройĕ çĕнтернĕ хыççăн наци ыйтăвĕнче пулнă çĕнĕ улшăнусене пĕтĕçтерсе çутатса парать, марксистла литературăра малтанхи хут социализмла çĕнĕ нацисем çинчен, Совет Союзĕнчи нацисем çинчен калакан вĕрентĕве пуçарса ярать.

1913 çултах ĕнтĕ Сталин юлташ наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе «Марксизм тата наци ыйтăвĕ» ятлă калама çук паха произведени çырса пичетлесе кăларнă. Кунта вăл наци ыйтăвне пур енĕпе те питĕ тарăн, питĕ тĕплĕн пăхса тухать, большевиксен наци ыйтăвĕ тĕлĕшĕнчи программине питĕ чаплăн хўтĕлет, большевиксен тăшманĕсене, II-мĕш Интернационалăн оппортунистла партийĕсен программине тăрă шыв çине кăларса, аркатмаллах çапса çĕмĕрет. «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» произведенин Сталин юлташ çакăнта асăннă класен кăллă кĕнекери шухăшсене малалла аталантарать.

Произведени пуçламăшĕнче Сталин юлташ наци ыйтăвĕн вырăссем туса хатĕрленĕ марксистла теорийĕ пĕртен-пĕр тĕрĕс теори пулса тăнине кăтартса парать. «Çав теори тăрăх,—тет Сталин юлташ,—наци вăл—çынсен истори тăршшĕнче йĕркеленсе çитнĕ çирĕп пĕрпеклĕхĕ пулса тăрать. Çынсен çак пĕрпеклĕхĕ аялта асăннă тăватă тĕп пĕрпеклĕхрен тухса тăрать: чĕлхе пĕр-пек пулнинчен, çĕршыв пĕр çĕрте пулнинчен, экономикăллă пурнăç пĕр пек пулнинчен, ăстăн тĕлĕшĕнчи хăнăхусем пĕр пек пулнинчен (урăхла каласан, наци культурин уйрăмлăхĕсем пĕр пек пулнинчен) тухса тăрать» (Сочиненисем, II том, 333 стр.).

Хăшпĕр «теоретиксем» çак большевикла теорие тўрлетме, «юсама» хăтланнă, вĕсем çак тăватă пĕрпеклĕх çумне пиллĕкмĕш пĕрпеклĕх хушма сĕннĕ. Çўлте асăннă пĕрпеклĕхсемсĕр пуçне нацисен хăйсен уйрăм государство пулмалла, тенĕ вĕсем. Çак сĕнў теори тĕлĕшпе те, политика тĕлĕшпе те, практика тĕлĕшпе те йăнăш пулнине Сталин юлташ тĕплĕн кăтартса парать. Хăйсен уйрăм государствисĕр пурăнакан нацисем наци пулма пултараймассĕ тенине шута илес пулсан, вара империализм пусмăрне лекнĕ нацисене наци тесе йышăнма юраман пулĕччĕ, колонири нацисен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвне «наци кĕрешĕвĕ» тесе шутлама юраман пулĕччĕ. Шăпах çакăн пек тума сĕнессĕ те ĕнтĕ пуç пулса тăракан çĕршывсенчи империалистсем. Çапла вара, кама наци теме юранине палăртнă чухне пиллĕкмĕш пĕрпеклĕхе шута илме сĕнни наукăна хирĕçле, марксизма хирĕçле сĕнў пулса тăрать, вăл империалистсен пусмăрне, нациллĕ пусмăра тўрре кăларма пулăшать. Кунсăр пуçне, вăл сĕнў совет республикисенчи буржуалла националистсене тўрре тухма пулăшать, мĕншĕн тесен буржуалла националистсем: советла нацисем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕрлешнĕ хыççăн наци пулма пăрахрĕç, теççĕ. Пиллĕкмĕш пĕрпеклĕх «теорийĕ» тăрăх, украинецсен нацийĕ революцичченхи вăхăтра наци пулман иккен, Центральнăй Рада вăхăтĕнче вăл наци пулнă пулать вара, совет влаçĕ туса хурсан каллех наци пулма пăрахнă иккен.

Çак айванла теорие Сталин юлташ вĕçне çитиех тăрă шыв çине кăларать. Советла нацисем пĕр тăванла çемьене пĕтĕççе, хамăр çĕршывра социализм туса хучĕç, нациллĕ Совет государствине чечеклентерчĕç, нациллĕ культурăна çўлĕ пусăма çĕклерĕç.

Сталин юлташ хăйĕн «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» произведенийĕнче хальхи вăхăтра нацисем хушшинче уйрăмлăхсем пуррине кăтартса парать, мĕншĕн тесен пĕрисем—буржуалла нацисем, теприсем—социализмла нацисем пулса тăрассĕ. Кунта Сталин юлташ нацисем мĕнле пуçланса кайни çинчен чарăнса тăрать, нацисем капитализм пуличченех, феодализм вăхăтĕнчех пуçланса кайнă тесе йăнăш тăвакансене критикăлать. Капитализм пуличчен нацисем пулман, пулма та пултарайман. Ун чухне наци паллисем çеç—чĕлхе, культура пĕрпеклĕхĕ, территори пуçланса кайма тытăннă, вĕсем вăйлăн аталаннă хыççăн çеç ўлĕмрен наци пулса тăма пултарнă. Анчах çав паллăсене вăйлăн аталанма уйрăм условисем кирлĕ пулнă, вăл условисем шăпах та ĕнтĕ капитализм вăхăтĕнче пулса тăнă, мĕншĕн тесен капитализм вăхăтĕнче çеç нациллĕ рынок, экономикăпа культурăн нациллĕ центрĕсем пулса тăрассĕ. Капитализм аталаннă вăхăтра пуçланса кайнă нацисем буржуалла нацисем пулассĕ. Ун пек нацисен шутне француззсен, акăлчансен, итальянецсен, çурçĕр американецсен нацийĕсене тата ытти нацисене те кĕртме пулать. Ку нацисене ертсе пыракан тĕп вăй вăл—буржуази тата унăн националистла партийĕсем. Ку нацисем, «наци пĕрлĕхĕшĕн» тесе, классем хушшинче мир тума тăрăшассĕ; ытти нацисен территорине туртса илсе хăйсен нацийĕн территорине анлăлатма тăрăшассĕ; ытти нацисене шанмассĕ тата кураймассĕ; сахал йышлă нацисене пусмăрлассĕ; империализмпа пĕр фронт тытса пырассĕ. Буржуалла нацисен кун-çулĕ капитализм кунçулĕпе çыхăнса тăрать, капитализм пĕтнипе пĕрле буржуалла нацисем те кусран çухалма тивĕçлĕ.

Октябрьти социализмлă аслă революциччен тĕнчере буржуалла нацисем çеç пулнă. Россиăра капитализма сирпĕтсе антарнă хыççăн, буржуазипе унăн националистла партийĕсене пĕтернĕ хыççăн, совет стройĕ çĕнтернĕ хыççăн буржуалла кивĕ нацисен никĕсĕ çинче çĕнĕ, советлă, социализмлă нацисем пуçланса кайрĕç, аталанма тытăнчĕç.

Совет Союзĕнчи хальхи нацисем—вырăссем, украинецсем, белоруссем, тутарсем, узбексем тата ыттисем те—патша Российĕнчи çав ятлă буржуалла кивĕ нацисенчен тĕпренех уйăрăлса тăрассĕ, вĕсем хăйсен класлă йышĕ тĕлĕшпе те, шухăшкăмăл тĕлĕшпе те, çавăн пекех тата хăйсен социаллă-политикăллă интересĕсемпе ĕмĕчĕсем тĕлĕшпе те тĕпренех уйăрăлса тăрассĕ.

Чăвашсем тĕлĕшпе те çавнах калама пулать. Анчах та пĕр пĕчĕк асăрхаттару туни кирлĕ.

Пурте пĕлессĕ ĕнтĕ, нацисен аталанăвĕн çўлĕшĕ пĕр пек пулмасть тата пĕр вырăнта тăмасть. Буржуалла нацисене илес пулсан, сăмахран, француззсен нацийĕн аталанăвĕ туркăсен нацийĕн аталанăвĕнчен экономика тĕлĕшпе те, политика тĕлĕшпе те тата культура тĕлĕшпе те чылай çўлĕрех пусăмра тăрать. Çапла вара, пĕр буржуалла нацисем ытларах аталанса çитнĕ, теприсем сахалрах аталаннă. Октябрьти революцичченхи чăвашсене шăпах ĕнтĕ çав сахалрах аталаннă нацисен шутне кĕртме пулать. Хальхи чăвашсем, паллах, чăвашсен буржуалла нацийĕнчен пур енĕпе те тĕпренех уйăрăлса тăрассĕ. Вĕсен халĕ буржуалла классем çук, шухăш-кăмăлĕсем те, социаллă-политикăллă интересĕсемпе ĕмĕчĕсем те вĕсен халĕ пачах урăхла. Хальхи чăвашсем — социализмлă çĕнĕ наци пулса тăрассĕ.

«Рабочи класпа унăн интернационалистла партийĕ çак çĕнĕ нацисене тĕрек парса тăракан тата ертсе пыракан вăй пулса тăрассĕ. Рабочи класпа ĕç хресченĕсем çĕнтерўллĕн социализм туса пырас тесе капитализм юлашкисене пĕтерме наци ăшĕнче союз туни; нацисемпе нациллĕ ушкăнсем пĕртан пулччăр тата ирĕклĕн аталанса пыччăр тесе нациллĕ пусмăрлăхăн юлашкисене пĕтерни; халăхсем хушшинче туслăх туса хурас тата интернационализма çирĕплетес тесе национализм юлашкисене пĕтерни; ытти халăхсен çĕршывĕпе пурлăхне туртса илес политикăна тата вăл тĕлĕшпе пыракан вăрçăсене хирĕç кĕрешнĕ чух, империализма хирĕç кĕрешнĕ чух пусмăрти тата тулли мар правăллă мĕнпур нацисемпе пĕр фронт тытса пыни,—çакăн пек ĕнтĕ çĕнĕ нацисен шухăш-кăмăлĕ тата социаллă-политикăллă сăн-сăпачĕ» (339 стр.).

Çапла ĕнтĕ, социализм вăхăтĕнче социализмла нацисем чечекленсе ўсессĕ. Вĕсене класлă хирĕçўсем хавшатмассĕ, çавăнпа вĕсем кирек хăш буржуалла нацирен те пĕтĕçўллĕрех тата пĕтĕм халăха пĕрлештерессĕ. Буржуалла нацисем кашкăрла законсем тăрăх пурăнассĕ пулсан, вĕсем национализм ялавĕ айĕнче тата нациллĕ хирĕçўсем урлă аталанса пырассĕ пулсан, социализмла нацисем вара пĕрпĕринпе туслă пурăнассĕ, пĕр-пĕрне пулăшассĕ, вĕсем пролетариллĕ интернационализмăн революциллĕ ялавĕ айĕнче аталанса пырассĕ.

* * *

Сталин юлташ хăйĕн «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» произведенийĕнче нацисемпе нациллĕ чĕлхесен малашлăхне питĕ уççăн кăтартса парать. Нацисен малашлăхне пăхса тухнă чухне социализм пĕр çĕршывра е пĕтĕм тĕнчипе çĕнтернине шута илес пулать, мĕншĕн тесен социализм пĕр çĕршывра çеç çĕнтернĕ чухне нацисен кунçулĕ пĕр майлă, социализм пĕтĕм тĕнчипе çĕнтернĕ чухне вĕсен кунçулĕ урăхларах майлă пулма тивĕçлĕ. Социализм пĕр çĕршывра çеç çĕнтернĕ пулсан, вăл, тĕнчери империализма чылаях вăйсăрлатать пулин те, нацисемпе нациллĕ чĕлхесене пĕр нацие е пĕр чĕлхене пĕрлештерме условисем туса хураймасть. Ытти çĕршывсенче капитализм йĕрки тытăнса тăнă пирки, империализм тĕрлĕ нацисене пусмăрлас политикăна тытса пынă пирки, нацисем пĕр-пĕрне шанманни, пĕр-пĕринчен уйрăлса пурăнасси, вĕсем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхасси е тата тепĕр чухне пĕр-пĕринпе тытăçса илесси те пулма пултарать-ха, пулать те.

Социализм пĕр çĕршывра çеç çĕнтернĕ тапхăрта нациллĕ уйрăмлăхсем пĕтмеççĕ кăна мар, пачах урăхла, социализмлă нацисем чечекленсе аталанма, нациллĕ чĕлхесемпе нациллĕ культурăсем вăйлăн аталанса ўсме тытăнассĕ. Çак нациллĕ культурăсем вара форма енĕпе нациллĕ, содержани енĕпе социализмлă культурăсем пулса тăрассĕ. Ку ыйтăва çутатса панă май, Сталин юлташ хăшпĕр хуйхă — теоретиксене тăрă шыв çине кăларать. Çав «теоретиксем»: пирĕн çĕршывра нациллĕ уйрăмлăхсем пулмалла мар, формипе нациллĕ, содержани енĕпе социализмлă культурăсене аталантарма кирлĕ мар, тесе супĕлтетнĕ. Çакă вăл ленинизма хирĕçле «теори» пулнă.

Ленин кăтартса панисене асра тытса, Сталин юлташ çапла çырать:

«Нациллĕ уйрăмлăхсем пĕтсе пырасси тата нацисем пĕр нацие пĕрлешесси социализм пĕр çĕршывра çĕнтернĕ тапхăрта мар, пĕтĕм тĕнчипе пролетариат диктатури туса хунă хыççăнхи тапхăрта кăна, урăхла каласан, социализм пур çĕршывсенче те çĕнтернĕ хыççăн, пĕтĕм тĕнчери социализмлă хуçалăхăн никĕсне хывнă хыççăн кăна пулма пултарать, тесе вĕрентет Ленин» (346 стр.). Мĕншĕн тесен, социализм пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерни пур çĕршывсенче те империализма тĕп тăвать, нацисем пĕр-пĕрне шанмасăр пурăнассине, вĕсем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхассине пĕтерет, нацисене пĕтĕм тĕнчери социализмлă пĕр хуçалăхра пĕтĕçтерет, çапла вара, мĕнпур нацисене майĕпен пĕр халăха пĕрлештерме кирлĕ условисене туса хатĕрлет.

Анчах та нациллĕ уйрăмлăхсем пĕтессипе тата нациллĕ чĕлхесем çухалса пырасси пĕтĕм тĕнчери империализма çĕнтернĕ хыççăн çийĕнчех, пĕр тăруках, çўлтен кăтартса пани тăрăх пулса иртме пултараймассĕ, тесе вĕрентет Сталин юлташ. Пĕтĕм тĕнчери империализма çĕнтернĕ хыççăн нацисен аталанăвĕ виçĕ тапхăр витĕр тухма кирлĕ, тесе шутлать Сталин юлташ.

Пĕрремĕш тапхăр вăхăтĕнче нацисем пĕр-пĕрне пусмăрласси татăкланах пĕтмелле, ĕлĕк пусмăрта пулнă нацисем тата нациллĕ чĕлхесем чечекленсе ўссе каймалла, нацисен пĕртанлăхĕ çирĕпленмелле, нацисем пĕр-пĕрне шанмасăр пурăнасси пĕтмелле, нацисем хушшинчи интернационалистла çыхăнусем çирĕпленсе пымалла.

Иккĕмĕш тапхăрта, пĕтĕм тĕнчери капитализмлă хуçалăх вырăнне пĕтĕм тĕнчери социализмлă пĕр хуçалăх пулса пынă май, пуриншĕн те паллă пĕр чĕлхе пулса пыма пуçлать, мĕншĕн тесен, пĕтĕм тĕнчере пĕр социализмлă хуçалăх пулнă пирки, пур нацисем те мĕнле те пулин пĕр чĕлхепе, пуриншĕн те паллărах чĕлхепе каласма кирлине туйма пуçлассĕ, çав вăхăтрах харпăр хăйĕн чĕлхисем те юлассĕ-ха. Малтанлăха пĕтĕм тĕнчери мĕнпур нацисене пĕрлештерекен пĕр экономикăллă центр мар, пĕртен-пĕр чĕлхе мар, зонăсем тăрăх нацисен уйрăм ушкăнĕсене пĕрлештерекен темиçе экономикăллă центр пулма пултарать, нацисен çав ушкăнĕсен кашнин пуриншĕн те паллă пĕр чĕлхе пулма пултарать.

Виççĕмĕш тапхăрта пĕтĕм тĕнчери социализмлă хуçалăх татăкланах çирĕпленет, социализм халăхсен йăлине кĕрет, пуриншĕн те паллă пĕр чĕлхе харпăр хăй чĕлхинчен лайăхраххине нацисем пурнăçра курса ĕненессĕ. Çакăн чухне вара нациллĕ уйрăмлăхсем тата нациллĕ чĕлхесем çухалса пыма тытăнассĕ, вĕсем вырăнне тĕнчери пуриншĕн те паллă пĕр чĕлхе йышăнма тытăнать.

Çакăн пек ĕнтĕ нацисен Сталин юлташ кăтартса панă малашлăхĕ.

* * *

Сталин юлташ большевиксен партийĕн наци ыйтăвĕ тĕлĕшĕнчи политикине тĕплĕн те уççăн çутатса парать. Наци ыйтăвĕ общество аталанăвĕ çинчен калакан пĕтĕм ыйтăвăн пĕр пайĕ кăна пулса тăрать, çавăн пирки ĕнтĕ нацисен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕн задачисем мĕнле пулассии вĕсен аталанăвĕ е революци мĕнле тапхăра кĕнинчен килет. Вырăс марксисчĕсем яланах наци ыйтăвĕ революци аталанăвĕ пирки тăракан пĕтĕм ыйтăвăн пĕр пайĕ пулса тăрать, тесе шутланă,—тет Сталин юлташ.—Революцин тĕрлĕ тапхăрĕнче наци ыйтăвĕ тĕрлĕ задачăсем лартать, вăл задачăсем историллĕ кашни вăхăтрах революци характерĕнчен тухса тăрассĕ, революци характерне кура партин наци ыйтăвĕ тĕлĕшĕнчи политики улшăнать. Буржуалла-демократиллĕ революцие хатĕрленĕ чухне парти çапла шутланă: патша влаçне сирпĕтсе антарни, феодализм юлашкисене вĕçне çитиех пĕтерни тата çĕршыва туллин демократизацилени наци ыйтăвне чи лайăххăн татса пани пулать, капитализм вăхăтĕнче наци ыйтăвне унтан лайăхрах татса пама май çук.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче, капитализмлă система йывăр кризиса кĕрсе ўкнĕ пирки кун йĕркинче социализмлă революци ыйтăвĕ тухса тăрсан, большевиксен партийĕ наци ыйтăвне татса памалли чи лайăх май вăл—социализмлă революци ыйтăвĕсене татса пани пулать, тесе шутланă.

Большевиксен партийĕн наци ыйтăвĕ тĕлĕшĕнчи политики çĕнтерчĕ. Пирĕн çĕршывра нациллĕ пусмăрлăха тĕп тунă, пур нацисене те пĕр тан право панă, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, большевиксен партийĕ шовинизма тата буржуалла национализма çĕмĕрсе тăкрĕ. Россиăри пур халăхсене те пĕр тăванла çемьене пĕтĕçтерчĕ, кая юлнă нацисене малта пыракансем пулăшассине организацилерĕ, пур халăхсене те хăйсен экономикипе культурине вăйлăн çĕклеме пулăшрĕ. Совет Союзĕнчи халăхсене интернационализм майлă вĕрентсе воспитани пачĕ.

Сталин юлташăн «Наци ыйтăвĕ тата ленинизм» произведенийĕ марксизм-ленинизма пуянлатакан, пирĕн кадрсене идея тĕлĕшпе воспитани парас ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан, ют çĕршывсенчи тăванла коммунистла тата рабочи партисене империализмпа унăн агенчĕсене хирĕç кĕрешме пулăшакан питех те паха произведени пулса тăрать.

В. ЯКОВЛЕВ.

Канаш МТС-ĕ ялхуçалăх ĕçĕсене çителĕксĕр пурнăçлать

Партипе правительство машина-трактор станцисем умне пысăк задача лартнă: вĕсен, социализмлă ялхуçалăхĕнчи пуян техникăпа туллин усă курса, тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлессишĕн, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене механизацилессишĕн тăрăшмалла; колхозсене вăрман тăрăхĕсем лартма, пĕвесемпе кÿлĕсем тума, улăхсемпе çарансене лайăхлатма тата строительство ĕçне вăйлатса пыма пулăшмалла. Паллах, çак задачăсене ăнăçлă пурнăçлана пырас тесен, техника мĕн пама пултарать, çавна пĕтĕмпех илме тăрăшас пулать.

Мĕнле пурнăçласа пырать-ха çак задачăсене Канаш МТС-ĕ?

МТС-ра тракторсемпе комбайнсем, молотилкăсемпе сеялкăсем, кулвтиваторсемпе трактор плугĕсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай. Анчах МТС коллективĕ техникăпа кирлĕ пек усă курайманть. Çакă вăл пĕтĕмĕшпех МТС дирекцийĕне парторганизаци çителĕксĕр ĕçленинчен килет. Иртнĕ çулта МТС тракторпа тумалли ĕçсен планне 92 процент кăна тултарнă. 1951 çулта вăл тырпул пухса кĕртес, кĕрхи çĕртме тăвас, вырăнти удобренисемпе минераллă удобренисем турттарас тĕлĕшпе уйрăмах начар ĕçлерĕ. МТС силос хывмалли плана мĕн пурĕ те 22 процент, вăрлăхсене сортласа тасатмалли плана 11 процент кăна тултарнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, МТС колхозсемпе тунă договорсене пĕрне те, нихăш ĕç енĕпе те тултарман. МТС-ри 10 трактор бригадинчен тракторпа тумалли ĕçсен планне 4 бригади кăна — Захарова, Михайлов, Гаврилов, Архипов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем çеç—тултарнă. Сорокин, Васильев, Селиванов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем вара задание 70—80 процент таран анчах пурнăçланă.

МТС коллективĕ тракторсемпе, комбайнсемпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Сăмахран, 1951 çулта, планпа пăхнă тăрăх, кашни трактор пуçне 500 гектар таран çĕр сухаламалла пулнă пулсан, 473 гектар кăна сухаланă. Çавăн пекех комбайнсемпе, молотилкăсемпе, сеялкăсемпе те туллин усă курса ĕçлемен. Тракторсемпе [illegible] чи хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче нумай ĕçлемесĕр ларнă. Çунтармалли япаласене те нормăран ытлашши расходласа пĕтернĕ.

Хăшпĕр механизаторсем енчен агротехника правилисене пăснисем те пулнă. Ĕç пахалăхне ÿстересси çине çиелтен пăхнипе, сăмахран, Юмансарти «Красный Октябрь» колхоз уйĕнче вырăнĕ-вырăнĕпе çиелтен кăна шăйăрттарса сухаланă. Тимофеев юлташ ертсе пыракан бригадăри трактористсем те Крупская ячĕпе тăракан колхозра 5—14 сантиметр тарăнăшĕ çеç сухаланă. Жданов ячĕпе тăракан тата «Канаш» колхозсенче вăрлăх акмалли нормăсене пăснисем пулнă.

Дирекципе парторганизаци тăрăшманнипе пула, МТС иртнĕ çулта тĕштырăсем акса тăвас ĕçе кăна хутшăннă. Техникăллă культурăсемпе пахча çимĕçсем акса тăвас, улăхсемпе çарансене лайăхлатас, выльăх-чĕрлĕх апачĕсем хатĕрлес тата ытти ĕçсене пачах хутшăнман теме те пулать. Нумаях пулмасть Янкăлчри Маленков ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Мухин юлташ МТС-ран выльăхсем валли улăм турас парас ĕçре пулăшу пама ыйтнă. Ку колхозра кĕркуннерenпех МТС-ăн тракторĕ тата соломорезки ларнă. Анчах вĕсем ĕçлемен, трактористсем унтан пăрахса кайнă. МТС директорĕ Сазонов юлташ çавна лайăх пĕлсе тăнă пулин те, нимĕнле мерăсем те йышăнман.

Аччари «Красная Армия» колхозăн сурăх çăмĕсене электричество вăйĕпе касмалли машинăсем пур. Юлашки вăхăтра вĕсемпе сурăх çăмĕсене касма пăрахнă. Анчах МТС механикĕ Ильин юлташ çав машинăсене ĕçлеттермелле тăвас тĕлĕшпе, темиçе хут ыйтсан та, колхоза пулăшу паман.

МТС-ăн чи пысăк çитменлĕхĕсенчен пĕри вăл—тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе хакламанни пулать. Машинăсене юсасси вăл—механизаторсен хальхи вăхăтри тĕп задачи. Апла пулсан та, Канаш МТС-ĕнче çак ĕçе халĕ те тивĕçлипе йĕркелемен. Вăл çакăнтан та курăнать: графикпа пăхнă тăрăх, декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 19 трактор юсаса кăлармалла пулнă пулсан, 5 тракторне çеç юсаса кăларнă. Тракторсене узловой меслетпе юсассине ячĕшĕн кăна организацилене: 32 узел вырăнне 18 узел çеç тунă, вĕсем те пурте ĕçлемеççĕ. Кунсăр пуçне МТС-ăн 6 тракторĕ паян кунччenех колхозсенче лараççĕ.

Кадрсемпе ĕçлесси те япăх тăрать. Механизаторсен ĕçри опычĕсене сарас, вĕсен техникăллă пĕлĕвĕсене ÿстерес енĕпе питех те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. МТС-ри парторганизаци çакăн пек çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе нимех те туман.

МТС-ра ĕç дисциплини те тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Механизаторсемпе ытти рабочисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне ячĕшĕн çеç туса пыраççĕ.

Партипе правительство МТС-сен ĕçне [illegible] 1952 çулта Канаш МТС-ĕ çĕнĕ тракторсемпе комбайнсем, молотилкăсемпе сеялкăсем тата ытти машинăсем нумай илет.

МТС коллективĕн, колхозсемпе тачă çыхăнса, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырассишĕн, машинăсемпе тухăçлă ĕçлессишĕн, машинăсене тирпейлĕ пăхса усрассишĕн, горючи перекетлессишĕн, машинăсене юсанă çĕрте государство укçа-тенкине перекетлессишĕн, пĕр сăмахпа каласан, умра тăракан ĕçсене пурне те большевикла пурнăçласа пырассишĕн кĕрешмелле.

С. АСЛАН.

Çĕнĕ цехсем уçăççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Инвалидсен «Гвардия» артель 1951 çулхи плана чылай иртттерсе тултарнă. Артель продукци пахалăхне лайăхлатнă, унăн хăйне ларакан хакне йÿнетнĕ.

1951 çулта артель тĕкĕр тăвакан, сăн ÿкерекен, чăпта çапакан цехсем уçрĕ. Кантур валли, сăн ÿкерекен, çĕвĕ çĕлекен цехсем валли çĕнĕ çуртсем лартнă. 1952 çулта артель сĕтел-пукан мастерскойĕ, колбаса тумалли цех уçма палăртнă.

А. РОМАНОВ.

Третьяковски галлерея залĕсенче (Мускав) 1951 çулхи Пĕтĕм Союзри художество выставки уçăлнă. Выставкăра живопись, скульптура тата графика произведенийĕсем нумай.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: выставкăн пĕр залĕнче.

В. ШАРОВСКИПЕ Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Çуракине хатĕрленес ĕçе ертсе пымалла

ВĂРМАР. Район Совечĕн VII-мĕш сессийĕ колхозсемпе МТС çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ И. Сапаркин юлташ тунă докладпа ялхуçалăх комисси председателĕ И. Григорьев юлташ тунă содокладa иртлесе сÿтсе яврĕ.

Ял Совечĕсем пуçарнипе малта пыракан колхозсем çитес çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Вĕсем вăрлăх фончĕсене иртнĕ çулхи октябрьпе ноябрь уйăхĕсенчех хывса çитернĕ. Вăрлăхсене сортласа, тасатса акма юрăхлă тунă. Ялхуçалăх машинисене те тĕплĕн юсаççĕ, вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Конюхсем лашасене çуракине лайăх кăларассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Анчах çуракине хатĕрленес ĕç районта кирлĕ пек пулса пырать теме çук-ха. [illegible] кирлĕ пек мерăсем йышăнман.

Районĕпе илсен нумай çул ÿсекен курăк вăррисем, силослăх культурăсемпе тымарçимĕç вăррисем чылай çитмеççĕ.

Районта вăрлăх сортласа тасатас ĕç юлса пырать. Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне вăрлăхăн çуррине кăна сортласа тасатнă. Вăрлăх тасатасси юлса пыни вăрлăх сортлакан машинăсемпе туллин усă курманнинчен килет.

Плугсемпе сеялкăсене, ялхуçалăх инвентарьне юсасси те çителĕксĕр пулса пырать. Плугсене 45 процент, сеялкăсемпе культиваторсене 27 процент кăна юсанă.

Районта уя тислĕк кăларас, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас, юр тытас, минераллă удобренисем хатĕрлес ĕçсем те пачах çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Минераллă удобренисене малта пыракан колхозсем анчах турттараççĕ. Юр тытма икĕ колхоз çеç пуçăннă.

Агротехникăпа зоотехника вĕренĕвĕ те юлса пырать. «Авангард» «Коммунизм», «Гигант», Жданов ячĕпе тăракан колхозсенче занятисем план тăрăх иртмеççĕ, вĕренекенсене вăйлă тырпул мастерĕсен пахa опычĕсемпе паллаштармаççĕ. Чылай çĕрте вĕренекенсем валли литература çук. Курссен ĕçне лайăхлатассипе, чи малтанах, районти ялхуçалăх пайĕпе унăн пропаганда енĕпе ĕçлекен руководителĕ ответлă пулмалла. Агрономсемпе зоотехниксем вырăнта пулса колхозсене ĕçлĕхлĕ пулăшу памалла.

Иренире тухса каланă В. Кондратьевпа Ф. Сапаркин депутатсем тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене ытла вăрахăн юсанăшăн, механизаторсенчен çирĕп кадрсем хатĕрлеменшĕн, колхозсемпе тунă договора пурнăçлама тăрăшманшăн МТС руководителĕсене критиклерĕç.

— «Хĕрлĕ Мăрат» колхозра çитес [illegible] пуçарман, колхоз председателĕ Васильев юлташ йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă. Çаксем çинчен райисполкомпа унăн ялхуçалăх пайĕ лайăх пĕлеççĕ, анчах нимĕнле мера та йышăнмаççĕ,—тет И. Неверов депутат.

— Çуракине хатĕрленнĕ тапхăрта «Большевик» колхоза ут таврашĕсем, урапа кустăрмисем, кăмрăк, михсем тата ытти те кирлĕ. Анчах суту-илÿ организацийĕсем ку тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ,—тет Е. Терентьев депутат. Тĕрĕс калать вăл. Райпотребсоюз руководителĕсем колхозсене пулăшас ыйтупа пачах интересленмеççĕ.

Сесси районти ялхуçалăх ĕçченĕсен умне çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни гектартан вăтам шутпа 18 центнертан кая мар тĕштырă, 160 центнер çĕрулми, пĕр çулхи плантаци çинче 22 центнер кок-сагыз тымарĕ, 6 центнер кантăр сÿсĕ туса илес задачăсем кăларса тăратрĕ.

И. ВОЛКОВ,
(Хамăр корр.).

Чăваш республикинчи бобр заповедникĕсем

Ĕлĕк пирĕн республикăри вăрмансемпе кÿлĕсенче хаклă мамăк тирлĕ чĕрчунсем—бобрсем нумай пурăннă. Кун çинчен пире паянхи кунччenех сыхланса юлнă историллĕ ятсем аван калаççĕ.

Сăмахран, Çĕмĕрле районĕнче «Бобр кÿлли», Улатăр районĕнче «Бобр пĕви» пур. Бобрсем пирĕн вырăнсенче йышлă пулни çинчен XV—XVI-мĕш ĕмĕрсенчи сыхланса юлнă документсем те каласа параççĕ. Чулхулари Ртищев воеводăн «Приход кĕнекисенче» бобрсем пурăнакан вырăнсене парăмсемшĕн пани çинчен çырни пур. XV—XVI-мĕш ĕмĕрсенчи «Дарственнăй грамота» пĕлтернĕ тăрăх, бобрсем ĕрчекен вырăнсене монастырьсемпе уйрăм пуян çынсене те панă пулнă.

Патша Российĕнче, бобрсене хаклă та хитре тиршĕн пĕр йĕркесĕр тытнипе пула, вĕсем уйрăм вырăнсенче çеç тата питĕ сахал сыхланса юлнă.

Бобр—кышлакан, чылай пысăк чĕрчун. Унăн кĕлетки 75—100 сантиметр тăршшĕ, хÿри 28—30 сантиметра çитет. Ÿссе çитнĕ бобр 30 килограмм е унтан ытларах та таять.

Бобр урисем вăрăм мар, чĕрнисем вăйлă та çирĕп. Вăл малти урисемпе хăйне валли шăтăксем хăвăрт чавать. Кайри урисем малтисенчен вăрăмрах, пÿрнисем хушшинче, кăвакалăнни пек, сурхах пур. Шывра ишнĕ чухне бобр урисемпе кĕсменпе ĕçленĕ пек ĕçлет. Уйрăмах малти касмалли шăлĕсем çивчĕ. Вĕсем ийĕ евĕрлĕ. Бобрсем шăлĕсемпе чылай пысăк йывăççене çăмăллăн касса йăвантараççĕ. Бобр кĕлетки савăл евĕрлĕ, ку вăл шывра ишме çăмăллатать. Кĕреçе евĕрлĕ хÿри 15 сантиметр сарлакăшне çитет, вăл майрака йышши япалапа витĕннĕ. Хÿри çапла пулни бобра шывра çăмăллăн ишме, йывăçа кышланă чухне тайăнса тăма кирлĕ.

Бобр çăмĕ çав тери çăра, вăл йĕлтĕртатса тăрать, шывра йĕпенмест. Бобр хăйĕн çăмне çулă шĕвĕкне якатсах тăрать. Вĕсем çулталăкне икĕ хутчен çăм тăкаççĕ: пĕрре апрель-май уйăхĕсенче, тепре—сентябрь уйăхĕнче. Бобр амисемпе аçисем хĕлле пĕтĕçеççĕ. 105—107 кунтан бобр ами çăра çăмлă 1—3 çура туса парать. Вĕсен йывăрăшĕ 380—600 грамм пулать. Темиçе сехетрен çурасен куçĕсем [illegible] Бобр амин сĕчĕ çăра та питĕ тутлăхлă. Унта 16 процент таран çу, 8 процент таран белок пулать. Çавна пула бобр çурисем хăвăрт ÿсеççĕ, икĕ уйăхран ÿсентăрансемпе çеç тăранса пурăнма тытăнаççĕ. Çурасем ашшĕ-амăшĕпе виçĕ çул хушши пĕрле пурăнаççĕ.

Бобрсем кил-суртне икĕ тĕрлĕ тăваççĕ: типĕ çырансенче шăтăксем чаваççĕ, йăвана пырса кĕмелли çул шыв айĕнче пулать. Ун пек вырăнсем пулмасан, бобрсем хăйсем кăшласа пĕтернĕ йывăç турачĕсенчен çурт тăваççĕ, ăна юшкăнпа шăлса çирĕплетеççĕ. Стенасен хулăнăшĕ çур метр ытла пулать. Пÿлĕмсен çÿллĕшĕ çур метр, урлăшĕ 1,5 метр ытла пулать. Пÿлĕме пырса кĕмелли шăтăк—шыв айĕнче.

Бобр йывăççене питех те ăста касать. Вăл хăйĕн хÿри çине тайăнса, йывăçа йĕри-тавра кышласа çаврăнать те касса йăвантарать.

Уйрăмах бобрсем плотинасем тунин интереслĕ. Вĕсем плотинасене шыв тăракан вырăнсенче, хăйсем пурăнакан çĕрти шыв шайĕ ан чактăр тесе тăваççĕ. Плотина тăршшĕ хăш чухне 200 метр е унтан та ытларах пулать. Плотинасене çирĕп тăваççĕ, ăна тума шыв тĕпне 10—15 сантиметр хулăнăш, 1—2 метр тăршшĕ темиçе рет каштасем хурса тухаççĕ. Вĕсен хушшисене çапăсем, шыври ÿсентăрансен тымарĕсем, чулсем, тăпра тултараççĕ, унхыççăн юшкăнпа шăлса çирĕплетеççĕ. Бобрсем плотинана йĕркеллĕ тытаççĕ, ăна юсасах тăраççĕ. Вĕсем ытларах çĕрле тухса çÿреççĕ, кăнтăрла бобрсене сайра хутра кăна курма пулать.

Бобрсем çулла ытларах курăксемпе (кăшкар ути, вĕлтрен тата ытти те) тăранса пурăнаççĕ. Кĕркуннe йывăç хупписене кышлаççĕ. Ытларах ăвăс, тополь, хурăн, пилеш, юман, çирĕк хупписене çиеççĕ. Бобрсем хĕл касмалăх 20 кубометр таран апат хатĕрлесе хураççĕ, ăна шыв тĕпне путараççĕ.

Патша Российĕнче бобрсем Белоруссире, Воронеж облаçĕнче тата Обь шывĕ таврашĕнче çеç сыхланса юлнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн бобрсем ĕрчекен вырăнсенчен заповедниксем туса хунă. Бобрсен шучĕ, бобрсен йышĕ çулсерен ÿссе пырать.

Пирĕн республикăна 1951 çулта сентябрь уйăхĕнче 23 бобр илсе килнĕ, вĕсенчен 12-ĕшне Çĕмĕрле районĕнчи «Бобр кÿллине», вунпĕрĕшне Атăл лешенчи Хура Амаксар кÿллине янă. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх, бобрсем пурăнакан вырăнсене заповедниксем туса хунă. Унта [illegible]

Бобрсем пирĕн патăрта пурăнма хăнăхса çитрĕç. Вĕсем хăйсене валли çуртсем тăваççĕ, апат хатĕрлеççĕ. Хура Амаксар кÿллине янă бобрсем 18 сантиметр таран хулăнăш йывăççене касса йăвантараççĕ.

Ку вăл бобрсем пирĕн патăрта та лайăх ĕрчеме пултарни çинчен калать.

П. ЧУГУНОВ.

Шахмат турнирĕ

Етĕрне хулинче декабрĕн 21-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче 17-мĕш шахмат турнирĕ пулса иртрĕ. Турнира Шупашкар, Советски, Муркаш, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне районĕсенчи шахматистсем 12 çын хутшăнчĕç.

Пĕрремĕш вырăна Çĕмĕрле районĕн представителĕ, Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш категорири шахматист Соболев юлташ йышăнчĕ. Вăл 11 вăйăра 10 очко илчĕ. Иккĕмĕш вырăна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Концеляров шахматист тухрĕ. Унăн 9,5 очко. Виççĕмĕш вырăна Суровцев (Етĕрне), тăваттăмĕш вырăна Анухтин (Етĕрне) йышăнчĕç.

Ал. МЕДВЕДЕВ.

Вăрман паттăрĕсем

(Очерк)

1. Мускав хăни

Михаил Николаевич Сысуйкин юлташ ĕçрен таврăнсан сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Ир кÿлĕм, хăй ĕçленĕ вăхăтра, Киререн илсе килнĕ çырусене пăхса тухрĕ. Тĕрлĕ çĕртен çыраççĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ патне. Акă унăн аллинче Улатăр вăрманпромхозĕнчи Толстобров трактористăн çырăвĕ. Вăл Михаил Николаевича хăйĕн опычĕпе паллаштарнăшăн тав тăвать. Халĕ ĕнтĕ хăй те ĕç нормине иртттерсе тултарни çинчен савăнса пĕлтерет. Акă тепĕр çыру. Кăна Кире рыблеспромхозĕнчи А. Маркин тракторист янă. Вăл иртнĕ çулла поселокра унпа тĕл пулнăччĕ. Ун чухне подшипник тупайманнипе Сысуйкин опычĕпе ĕçлейменни çинчен калаçнăччĕ. Михаил Николаевич çак хĕрÿллĕ тракториста, хăйĕн суйлавçине, çийĕнчех пулăшу пачĕ. Шыв-шурлă вăхăтра Кирене, вуникĕ çухрăма кайса килчĕ, юлташне подшипник тупса пачĕ.

— Халĕ ĕнтĕ эпĕ те сан опытпа усă куратăп. Ĕç ăнса пырать. Тав сире вăхăтра, пулăшнăшăн, — тесе çырать А. Маркин.

Михаил Николаевич патне трактористсемпе колхозниксем, нумай суйлавçăсем çырса тăраççĕ. Унтан кирлĕ чухне пулăшу ыйтаççĕ.

...Сысуйкин юлташ сĕтел хушшинчен тухса чÿрече патне утса пычĕ. Паян тĕмшĕн ăш вырăнта мар унăн. Халь-халь чÿрече умĕнчен такам иртсе каяс пек, алăка уçса пÿрте кĕрсе тăрас пек туйăнать. Акă вăл яланхи йăлипе патефон патне пычĕ, çĕнĕ пластинка хурса юрлаттарма пуçларĕ.

— Атте, «Çăма садикне» яр-ха,— чĕвĕлти чĕкеç чĕлхипе чĕвĕлтетрĕ виççулхи Нина.

— Халех, Иночка, халех.

Çак вăхăтра алăк уçăлса хупăнчĕ. Пÿрте «Южнăй» вăрман участокĕн начальникĕ Федор Федорович Кильтеев кĕрсе тăчĕ.

— Çĕнĕ хыпар, Михаил Николаевич, савăнăçлă хыпар, — пÿрте кĕнĕ-кĕменех каларĕ вăл.— Сана Мускава министерствăна чĕнеççĕ... Хăвăн опыту çинчен каласа пама... Акă телеграмма.

Сысуйкин юлташ, ĕненмесĕр, телеграммăна темиçе хут вуласа тухрĕ.

— Манах чĕнеççĕ-ши вара?— терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Çав кунхинех вăл хатĕрленме пуçларĕ. Çак хыпар ăна пĕрре те канăçлăх памарĕ.

— Мĕнле килсе тухрĕ-ха ку капла. Ăçтан эпĕ, рядовой тракторист пуçăмпа, министра, инженерсене хамăн ĕç çинчен каласа парăп. Çитменнине тата вĕсем, ахаль инженерсем кăна та мар, Мускав инженерĕсем,— шухăшларĕ вăл.

Çак шухăшсем ăна Кире вăрманпромхозĕнчи главнăй инженер Пшеничный юлташ патне илсе çитерчĕç. Чи малтанах «КТ-12» тракторпа ĕçлеме тытăнсан та вăл, хăй пĕлмен япаласене, унтан ыйтса пĕлетчĕ, унпа канашлатчĕ.

— Э, Михаил Николаевич çитрĕ. Эпир сана паян иртенпех кĕтетпĕр,— кăмăллăн кĕтсе илчĕ ăна главнăй инженер.

— Апла пулĕ те-ха, Мускава ма урăххине ямастăр. Эпĕ унта нимĕнех те калама пĕлес çук. Ун пек çĕрте чĕлхе-çăвар çыхланать манăн...

— Ан пăшăрханăр. Сиртен унта ытлашшине ыйтмĕç. Хăвăр мĕнле ĕçленине йĕрки-йĕрипе каласа парăр-та—ĕçĕ те пĕтнĕ,— çемçен каларĕ инженер.— Калăпăр, акă, эсĕ Мускавра, аслă залра, калăпăр эсĕ, акă, сăмах пуçласа яратăн.

Михаил Николаевич, Пшеничный инженера хăйĕн тăванĕ вырăннех хураканскер, ним пăшăрханмасăр-тумасăр, ерипен кăна калаçма пуçларĕ, унтан унăн сасси вăйланнăçемĕн вăйланса, хăватланса пычĕ, пĕтĕм пÿлĕме ытамласа илнĕ пек пулчĕ.

— Тен, кайиччен кураймăпăр. Эпĕ Улатăра çитме васкатăп. Ăсатма вăхăтăм çук. Чипер кайса кил, чипер!— унпа сывпуллашрĕ Пшеничный.

— Сирĕн те çул ăнăçлă пултăр, инженер юлташ!

* * *

Кире станцинче халăх хĕвĕшсе кăна тăрать. Пассажирсем поезд килессе кĕтеççĕ. Кĕрхи вăрманти йывăççем сарă çулçисене перрон çине тăкаççĕ. Йывăççен хушшинчен, станци çурчĕ патĕнчен, аккордеон сасси, çамрăк-кĕрĕмсен янравлă юрри илтĕнет.

— Вун-вуниилĕк çул каярах çакăнта нимĕнех те çукчĕ вĕт, çич-сакăр çуртран та ытла марччĕ,— тет сарă сухаллă старик, аллипе рабочисем пурăнакан поселок еннелле кăтартса.

Çул кайма тухнă çынсем, старик сăмахне илтнĕ пекех, вĕр-çĕнĕ çуртсем çинелле, çак çулсенче ÿссе ларнă калама çук пысăк поселок çинелле пăхаççĕ. Акă вĕсен куç умне пĕрене тиекен машинăсем туха-туха тăраççĕ. Пĕлтĕр-висĕм çулсенче çав машинăсене кунта никам та курман. Халĕ вĕсем вăрăм пĕренесене çаклатса илсе платформа çине кайса хураççĕ, платформисем пĕр самантрах тиенеççĕ, пĕрене купи пĕр самантрах чакнă пек пулать, анчах та ун вырăнне çĕнĕ купасем ÿссе лараççĕ. Çавна пурне те машина тăвать!

Эшелонсем пĕрин хыççăн тепри Кире вăрманĕнче хатĕрленĕ йывăçа коммунизмăн аслă стройкисем валли иле-иле каяççĕ. Вагонсем çинче: «Сталинград валли!», «Атăлпа Дон хушшинчи канал валли!», «Донбасс валли!», тесе çырнисене вуласа пĕлтĕн.

Михаил Николаевич Сысуйкин та, çав паçăрхи ватă старикпе, ытти пассажирсем пекех, çĕнĕ машинăсем пĕрене тиенине чылайччен пăхса тăчĕ. Унтан вăл, поезд сассине илтсен, кĕрнеклĕ тăлпăвĕпе тепĕр хут хысалалла çаврăнса, çак сăнсене мĕн ĕмĕрлĕхех куç умĕнчен ярасшăн пулман пек, тепĕр хут тинкерсе пăхса илчĕ, çирĕппĕн-çирĕппĕн пуçса, малалла утрĕ. Вăл утнă майăн ытттăн-кĕмĕл орденĕсем чăнкăртатса пычĕç.

Кунта ăна пĕлмен çын çук та темелле. Те çавăнпах та ĕнтĕ Михаил Николаевича куран-пĕри çул парса тăчĕ, куçĕпе ăсатсах ячĕ.

Поезд станцине килсе чарăнчĕ.

Сысуйкин юлташ ĕнтĕ хăйпе пĕрле вăрманта ĕçленĕ çынсемпе сывпуллашма та ĕлкĕрчĕ, кашнинех алă парса вагон пусми çине хăпарчĕ.

— Эсĕ, Миша, унта Мускавра пирĕншĕн те курса çÿре. Тен, аслă аттемĕрпе те тĕл пулăн. Пиртен, çĕршыв валли йывăç хатĕрлекенсенчен, хĕрÿллĕ салам кала. Çĕршыв валли мĕн чухлĕ йывăç кирлĕ, çавăн чухлĕ хатĕрлеме пулчĕç те,— юлашки сăмах каласа ярать ăна парторг.

...Акă Михаил Николаевич Сысуйкин юлташ Мускавра. Кĕске вăхăт хушшинче ăçта кăна çитсе курмарĕ вăл. Тĕнчери чи чаплă метрополитенăн йăлтăртатса тăракан вагонĕсем ăна çĕрте пĕр тĕле илсе çитерчĕç. Пĕрре вăл «Динамо» стадиона пырса тухать, тепре Советсен Çуртĕ патне анса юлать. Мускава урлă пирлĕ кумать вăл. Пурпичен ытларах ăна çĕрлехи пин-пин çутăпа ялкăшса тăракан Мускав тĕлĕнтерет.

Чăнах та, илемлĕ ĕнтĕ çĕрлехи Мускав! Урамсенче пин-пин машинăсем çутатса иртеççĕ, хĕрлĕ-симĕс çутăсем мĕлтлетсе кăна тăраççĕ кунта. Çĕрлехи тап-таса та сеп-сенкер тÿпенелле пăхатăн та çĕнĕрен тăвакан çÿллĕ-çÿллĕ çуртсем пĕлĕтелле кармашнине куратăн. Çав çуртсем тăррине хĕрлĕ çутăпа çулпуçăн ятне çырса хунă.

Ешĕл сăрпа сăрласа лартнă башнясемпе куполсем вара электричество çутипе, чăнах та, сенкер тÿпе евĕрлех туйăнаççĕ. Çуртсен эрешлĕ тăррисене курсан, вĕсене ахах таврашĕнчен касса кăларнă чи хаклă йышши япала вырăннех, вылямалли тетте япала вырăннех хурас килет. Савăнăçпа ирĕклĕх хули, мирĕ пурнăçшăн, этем ырлăхĕшĕн куллен-кун ÿсекен, вăйлăланакан, чечекленекен хула!

Пĕр пăхсан, ун çинчен куçа илес килмест, курсан-пурăнсан, тухса килес килмест иккен!

Тепĕр кунхине вăл Ленин мавзолейне кайса курчĕ, Кремль патĕнчен утса иртрĕ. Куç умне ирĕксĕрех ача чухнехи кунсем туха-туха тăчĕç. Пĕчĕк чухне ăçтан шухăшлама пултартăр-ха вăл Кремль çумĕнчен, Хĕрлĕ площадьпе утса иртессе?! Ялти эрĕм тавраш пусса илнĕ урамра çарран тустарса çÿрекен ачашăн Мускав халапри пек инçетре пулнă. Çитменнине тата Миша ялти пуçламăш шкултан çеç вĕренсе тухнă. Çемье йышлă пирки вăл 14 çула çитсенех, тĕрекдĕскер, трактористсен курсне вĕренме кĕнĕ. 1939 çулччен, салтака кайиччен, тракториста ĕçленĕ. Механик-водитель Сысуйкин вăрçа Брест-Литовскинче кĕтсе илнĕ. 1942 çулхи август уйăхĕнче «КВ» танкпа Сталинградра çапăçнă. Сталинград çуннине, ача-пăчасем, хула çыннисем хуларан туха-туха кайнине вăл хăй куçĕпе хăй курнă, халăх хуйхине халăхпа пĕрле тÿссе иртттернĕ. Сталинградри Баррикада районĕнче çапăçнă чухне унăн танкĕ пăсăлнă. Çапах та вăл сирсе-сирĕлми килекен тăшмана çав юрăхсăр танк ăшĕнчен пулеметпа персе тăнă, хăйсем патне яман. Кайран ăна Сталинград паттăрĕсем трактор заводĕнче туса хатĕрленĕ танк парнеленĕ. Вара Сысуйкин-гвардеец çав парне-танкпа паттăр Хĕрлĕ Çарпа пĕрле Сталинграда тăшманран сыхласа хăварнă, Сталинградран Румынине, Болгарине çитнĕ. Казанлык патĕнчи кĕрен-чечек айлăмне фашистсенчен хăтарнă, кайран Чехословакипе Венгри çĕршывĕсем урлă паттăррăн кĕрешсе иртнĕ, Германие çĕнтерсен, хĕвелтухăçне çитнĕ, Хинган тăвĕ урлă каçнă, Порт-Артура пырса тухнă.

Кирек ăçта çитсен те вăл çак хула çинчен, Мускав çинчен шухăшланă.

Вăрман промышленность министерствинче те Михаил Николаевич çакăн çинчен шухăшланă. Акă унăн инженерсем умĕнче, вăрман промышленносне ертсе пыракансем умĕнче сăмах калмалла, вĕсене хăйĕн опычĕпе паллаштармалла. Ăна пурте тимлĕ итлеççĕ.

...Михаил Николаевич Сысуйкин 1950 çул кĕркунне «Закарпат вăрман» трестĕнче ĕçлекен Бенда тракторист чĕнсе каланине вуланă. Бенда Совет Союзĕнчи вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен трактористсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра кашни трактор пуçне 10 пин кубометр йывăç машина çулĕ çине турттарса тухма чĕнсе каланă. Çак чĕнĕве йышăнса Сысуйкин Бенда патне çыру çырса янă.—Эпĕ вăрçăра гвардеец-танкист пулнă, кунта та гвардеецсен ятне ямăпăр,— тенĕ вăл унта.

Михаил Николаевич гвардеец-тракторист ятне илтмe тивĕçлĕ пулнă. Вăл 1950—1951 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра, ултă уйăх хушшинче, 10.454 кубометр йывăç автоçул çине турттарса кăларать. Уйăхне вăтам шутпа 3.466 тенкĕ ĕçлесе илет. 1950 çулта вăл «КТ-12» тракторпа 15.683 кубометр йывăç турттарса кăларнă, ĕç нормине 142,5 процент тултарнă.

— Эпĕ, — тет Михаил Николаевич, хĕрсе кайса,— çак хисепе татах та ÿстерме пултараттăмчĕ, анчах трактора юсама ямалла пулчĕ, трактор Улатăрта вунвиçĕ кун ларчĕ. Кăçал мана «КТ-12» маркăллă çĕнĕ трактор пачĕç. Эпĕ унпа 3.000 сехет хушши пĕр юсамасăр ĕçлеме, 20 пин кубометр йывăç турттарма сăмах патăм.— Сысуйкин юлташ калаçма чарăнса йĕри-тавралла, хăйне итлесе ларакан инженерсемпе чаплă çынсем çине пăхса илчĕ.— Эпир хатĕрленĕ йывăç Сталинграда, хамăр чунăмăрсене хĕрхенмесĕр çапăçнă вырăна каять, мирлĕ пурнăç тума каять. Коммунизмăн аслă стройкисем валли, Тăван Мускавăмăр валли, мĕн кирлине пурне те парăпăр...

Михаил Николаевич сăмах каласа пĕтерчĕ, тарланă çамкине алтутрипе шăлса илчĕ. Çак вăхăтра унăн куçĕсем савăнăçпа ялкăшса кайрĕç.

РСФСР Вăрман промышленность министрĕ ун патнелле утса килет: унăн аллине хыттăн-хыттăн чăмăртаса, ăна, рядовой трактористa, ăшă сăмахсемпе саламлать:

— Вăрман паттăрĕсем, чăн-чăн гвардеецсем, эпир сире шанатпăр. Сире Сталин шанать!

ВАЛЕНТИН УРДАШ.

И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани пирки урăх çĕршывсенче мĕн калаççĕ

Япони

ТОКИО, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин ыйтнине ответлесе янă послание Японири радио тăрăх кун каçиччен темиçе хутчен те вуласа панă.

Токиори радио ирхи передачăра Сталин юлташăн посланийĕнче мĕн çырни çинчен пĕлтернĕ. Каярахпа послани çинчен радиокомментатор Риници Сасаки каласа панă.

Паян Совет Союзĕн премьерĕ Сталин Япони халăхĕ патне пысăк пĕлтерĕшлĕ послани янă, тенĕ Сасаки. Сталин премьертан Киодо агентствин главнăй редакторĕ Ивамото çĕнĕ çул ячĕпе послани ярса пама ыйтнă. Сталин премьер çав ыйтăва ответлесе послани янă.

Посланире Японие ют çĕршыв оккупацийĕ пирки инкеке лекнĕ Япони халăхне Совет Союзĕнчи халăхсем тулли кăмăлпа хисеплени çинчен калană.

Сталин премьер Япони халăхне хăйĕн çĕршывне çĕнĕрен çĕклентерессишĕн тата хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçе ăнăçлă пурнăçласа пыма ырă сунать. Вăл рабочисене ĕççĕрлĕхрен тата ĕçшĕн сахал тӳлениччен хăтăлма, халăха куллен кирлĕ таварсен пысăк хакĕсене пĕтерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунать.

Япони хресченĕсене Сталин премьер çĕр çуккинчен тата çĕр сахаллинчен хăтăлма, пысăк налогсене пĕтерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунать.

Сталин премьер Японин пĕтĕм халăхне тата унăн интеллигенцине Японири демократиллĕ вăйсем пĕтĕмпех çĕнтерессине пурнăçлама, çĕршыври экономикăллă пурнăçа вăйлатса çĕклентерме, наци культурине, наукине, искусствине чечеклентерме тата мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунать.

Эпир Киодо агентствин главнăй редакторĕ Ивамото çакăн пек послани илни çинчен пĕлсен, ун патĕнче пултăмăр. Вăл пире çапла каларĕ: агентство тĕнчери 18 çĕршыв премьерĕсенчен Япони халăхне послани ярса пама ыйтрĕ. Вĕсенчен Сталин премьер кăна паян хăйĕн посланине ярса пачĕ.

Япони комментаторĕ ку послание пуринчен ытларах дипломати енĕпе калана самах, Америка Япони тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна хирĕçле сăмах, тесе хаклама пăхать.

Комментатор çапла калать: «Америка Çурçĕр Атлантика пакчĕ тăрăх Европăри çĕршывсенче çар базисем туни Европăшăн тата пĕтĕм тĕнчешĕн тӳрремĕнех хăрушлăх туса хурать, тесе Совет Союзĕн представителĕсем тĕнчери çĕршывсен пур конференцийĕсемпе канашлăвĕсенче те яланах калаççĕ. Çавăн пек шухăш халĕ Японире пур çĕрте те сарăлчĕ, тесе калама пулать.

И. В. Сталин посланийĕ «Совет Союзĕ Япони тĕлĕшпе çĕнĕ политика тытса пыма пуçланине кăтартса парать», тесе шутлать комментатор.

«Эпир çакна асăрхатпăр: иртнĕ çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче, Совет Союзĕнчи революци пулнине уявланă кун, Совет Союзĕн Японири миссийĕ официальнăй йĕркепе пирĕн Иосида премьерпа правительство членĕсене банкета чĕнчĕ,—тенĕ комментатор.—Çавăн пек хăнана чĕнни вăрçă хыççăн малтанхи хут пулни çинчен калаçаççĕ. Ноябрь уйăхĕнче Совет миссийĕн членĕсем парламента пычĕç, унта депутатсемпе Японипе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илĕве йĕркелесси çинчен калаçрĕç. Кунсăр пуçне, экономика деятелĕсене—Ицзиро Исикавăпа тепĕр вунă çынна—Пĕтĕм тĕнчери экономикăллă канашлăва пыма чĕннĕ. Ку канашлăва кăçалхи апрель уйăхĕнче Мускавра пухаççĕ. Çак кунсенче, Сталин премьер çуралнă куна уявланă вăхăтра, Икуо Оямăпа тĕнчери сталинла мир премийĕ памалла тунă. Ояма коммунист мар пулин те, мир ĕçĕшĕн хытă кĕрешет. Ăна мир ĕçĕшĕн кĕрешнĕшĕн награда памалла тунă. Çаксене пурне те шута илсе, çапла калама пулать: Сталин премьерăн паянхи посланийĕ «Совет Союзĕ Япони тĕлĕшпе çĕнĕ политика тытса пыма пуçланине кăтартса парать».

ТОКИО, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă ответ пирки дипломатсем хушшинче мĕн калаçни çинчен Юнайтед пресс агентствин Инçет Хĕвелтухăçĕнчи уйрăмĕн руководителĕ Хобрайт çырса пĕлтернĕ. Вăл мĕн пĕлтерни çинчен Токиори радио каласа панă. Унăн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, дипломати енĕпе ĕçлекен пĕр представитель Сталин премьерăн посланийĕ питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ çыру, тенĕ. Тепĕр дипломат çавна палăртнă: Сталин премьерăн посланийĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсем те иртнĕ вăхăтра ют çĕршывсем оккупациленинчен йывăр хĕн-хур тӳссе курнă, çавăнпа та вĕсем Японн халăхĕ халĕ, ют çĕршыв оккупацилесе тăнă условисенче, мĕн т[illegible] хĕн-хур тӳссе пур[illegible]не пайăх [illegible]анаççĕ, тесе çырнă. Çавăн пек çырни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ сăмах пулса тăрать, тенĕ дипломат.

Сталин премьер хăйĕн посланине малтан пуçласа вĕсне çитиччĕнех ăшă кăмăлпа, туслă çырнă, çавăнпа вăл уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ çыру пулса тăрать, тенĕ Японири пысăк ĕçри пĕр çын».

ТОКИО, январĕн 2-мĕшĕ. Çĕнĕ çул пуçланнă кун Японири хаçатсен редакцийĕсем ĕçлемен. Вĕсем И. В. Сталин посланине паян пичетлесе кăларнă.

Китай Халăх Республики

ПЕКИН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кăнтăрла Пекинри радио тăрăх И. В. Сталин Японири Киодо агентствин главнăй редакторĕ Киси Ивамото господин патне янă телеграммăн пĕтĕм текстне вуласа панă.

Польша

ВАРШАВА, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Польшăра центрти хаçатсем пурте И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послание пĕрремĕш страницăсенче пичетлесе кăларнă.

«Трибуна люду» хаçат заголовокра: Сталин юлташ Япони халăхне хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре, миршĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума, Японири демократиллĕ вăйсем пĕтĕмпех çĕнтерессине пурнăçлама ырă сунать, тесе çырать.

Чехословаки

ПРАГА, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ ячĕпе янă посланипе Чехословаки халăхĕ интересленсе паллашать. Ĕнер послание Чехословакири радио тăрăх темиçе хутчен те вуласа панă.

Болгари

СОФИЯ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхне янă послание Болгарире калама çук интересленсе йышăннă. Паян ку послание Софийăри радио тăрăх тата çĕршыври ытти радиостанцисенчен темиçе хутчен те вуласа панă. И. В. Сталин Японии халăхне янă послани текстне паян Болгари телеграф агентстви ятарласа кăларнă бюллетеньре пичетленĕ.

СОФИЯ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Работническо дело» хаçат И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă çырăва пĕрремĕш страницăра, пысăк заголовокпа пичетлесе кăларнă.

И. В. Сталин посланине паян Софийăри радио тăрăх тепĕр хут вуласа панă.

Румыни

БУХАРЕСТ, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхне янă посланипе Румыни халăхĕ питĕ интересленсе паллашрĕ. И. В. Сталин юлташăн посланине паян Бухарестри радио тăрăх виçĕ хутчен вуласа панă.

Венгри

БУДАПЕШТ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послание Венгрири общественность интересленсе кĕтсе илнĕ. Ĕнер каçхине тата çĕрле И. В. Сталин посланине Будапештри радио тăрăх виçĕ хутчен вуласа панă. Паян ирхине ăна икĕ хутчен радио тăрăх вуланă. Ăна темиçе пин ĕçсыннн итленĕ.

«Фюггетлен Мальярорсаг» тата «Вилагошшаг» хаçатсен паянхи номерĕнче И. В. Сталин юлташăн посланине пĕрремĕш страницăсенче, пысăк шрифтпа пичетленĕ.

Паян ытти хаçатсем тухман.

Демократиллĕ Германи Республики

БЕРЛИН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС) Берлинăн хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче каçхине тухакан хаçатсем паян И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă çырăва пĕрремĕш страницăсенче пичетленĕ.

«Берлинер цейтунг» хаçат послании пĕтĕм текстне «И. В. Сталин Японии халăхне саламлать» тесе ят парса пичетлесе кăларнă.

БЕРЛИН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра каçхине тухакан «Нахтэкспресс» хаçат И. В. Сталин Генералиссимус çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послание пĕрремĕш стра[illegible]ăра, «Сталин Японии халăхĕ патне ян[illegible]» тесе ят парса пичетлесе кăларнă.

И. В. Сталин Генералиссимус Японири рабочисене, хресченсене тата интеллигенцие миршĕн кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тума ырă сунать, тенĕ хаçатра.

Итали

РИМ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем И. В. Сталин Японии халăхне саламласа янă çырăва курăнмалли вырăнсенче пичетленĕ. «Унита» хаçат послании пĕтĕм текстне пĕрремĕш страницăра, «Мирпе демократи çĕнтерĕвĕшĕн» тесе ят парса пичетлесе кăларнă.

«Аванти» хаçат: «Сталин Японии халăхĕ патне янă послани халĕ, США Японие хĕспăшаллантарма тата ăна хăйĕн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи агрессиллĕ планĕсене пурнăçлама хутшăнтарма хăтланнă вăхăтра, пысăк пĕлтерĕшлĕ çыру пулса тăрать», тесе çырать.

Сталин юлташ Японии халăхне саламласа çырнă послани çинчен сылтăмри хаçатсем те пĕлтереççĕ. Вĕсем çав хыпара Японири пур радиостанцисем те пĕлтернине палăртаççĕ.

Франци

ПАРИЖ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Францире каçхине тухакан хаçатсем пурте И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхне послани яни çинчен пĕлтереççĕ.

«Се суар» хаçат посланире мĕн çинчен каланине кĕскен пĕлтерет. Ку пĕлтерĕве: «Сталин Японии халăхне ирĕклĕхпе телей сунать», тесе ят панă.

Англи

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн çĕрле тухнă номерĕнче И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхне послани яни çинчен пĕлтернĕ. Хаçат И. В. Сталин юлташăн çырăвĕнчен уйрăм вырăнсене илсе пичетленĕ. Сăмахран, хаçат И. В. Сталин посланинчи çак вырăна—Японин ют çĕршыв оккупацийĕ пирки инкеке лекнĕ халăхне Совет Союзĕнчи халăхсем тулли кăмăлпа хисеплени çинчен тата Японии халăхĕ хăйĕн çĕршывне никама пăхăнман государство тăвассине шанса тăни çинчен каланă вырăна илсе кăтартнă.

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс», «Дейли мейл», «Ньюс кроникл» тата «Дейли геральд» хаçатсем И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторне Киси Ивамото господина панă ответ çинчен пĕлтереççĕ.

«Таймс» хаçат И. В. Сталин юлташăн посланийĕнче Японии халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн хастарлă кĕрешни çинчен тата Японин ют çĕршыв оккупацийĕнчен хĕн-хур курса пурăнакан халăхне совет халăхĕ тулли кăмăлпа хисеплени çинчен каланине уйрăмах палăртать.

«Дейли геральд» хаçат И. В. Сталин посланийĕ çинчен пĕлтернĕ. Çавăнпа пĕрлех, хăйĕн тулашри политика ыйтăвĕсене сутатакан обозревателĕ кун пирки тем тĕрлĕ тапăхса çырнă статьине пичетленĕ.

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Дейли уоркер» хаçат И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхне янă послани çинчен пĕлтернине пĕрремĕш страницăра пичетленĕ. Пĕлтерĕве «Сталин посланийĕ японецсене хавхалантарать», тесе ят панă.

И. В. Сталин юлташ Японии халăхне тулли кăмăлпа хисеплени çинчен пĕлтернине тата ăна миршĕн, хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн ăнăçлă кĕрешсе пыма ырă суннине хаçат уйрăмах палăртать.

США

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн çĕрле тухнă номерĕнче И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне послани яни çинчен пĕлтернĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат послани çинчен кĕскен пĕлтернĕ. Январĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла хаçатсем тухман.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс тата Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕсем Токиоран пĕлтернĕ хыпарсенче И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послани çинчен тĕплĕ каласа панă. Анчах Нью-Йоркра ирхине тухнă хаçатсем çав пĕлтерӳсене пичетлемен.

Норвеги

ОСЛО, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послани çинчен хаçатсем кĕскен çырса пĕлтернĕ.

Дани

КОПЕНГАГЕН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Ланд ог фольк» хаçат И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послание пĕрремĕш страницăра пичетленĕ.

Хаçат çинче И. В. Сталин портретне пичетлесе кăларнă.

Пакистан

КАРАЧИ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пакистанри пур хаçатсем те И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Японии халăхĕ патне янă послание пичетленĕ.

Швейцари

БЕРН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарири радио И. В. Сталин Японири Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă посланире мĕн калани çинчен пĕлтернĕ.

Инди

ДЕЛИ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хаçатсем Сталин юлташ Японири Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани çинчен пĕлтерекен хыпара пичетленĕ. Послани пирки хаçатсем хăйсем енчен нимĕн те çырман.

Клемент Готвальд çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмах

ПРАГА, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Чехословакири радио тăрăх Чехословаки республикин президенчĕ Клемент Готвальд çĕнĕ çул ячĕпе сăмах каланă. 1951 çулта тĕнчери лару-тăру мĕнле пулни çинчен каласа, Клемент Готвальд çакна палăртнă: США пуçлăхĕсем хăйсен планĕсене пурнăçлама урса тăрăшрĕç пулин те, иртнĕ çулталăкра вĕсен планĕсене путлантарса лартнă. Çакă вăл уйрăмах пысăк ĕç туни пулать. Ку пысăк ĕçе пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансен аслă юхăмĕ, хăватлă Совет Союзĕ ертсе пыракан юхăм тăрăшнипе тума пултарнă.

Эпир Чехословакире, тенĕ Готвальд, мир лагерĕн малти позицийĕсенчен пĕринче тăратпăр. Çавăнпа та пирĕн тавра пулса иртекен пур ĕçсем те пирĕн çĕршыври пурнăçра палăрнине ăнланса илме пулать ĕнтĕ. Паян эпир мир ĕçĕшĕн хамăр участокра кĕрешетпĕр, хамăрăн демократиллĕ халăх республикине тĕреклетсе пыратпăр, унăн политикăпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне ӳстерсе çирĕплетме, социализмлă çĕнĕ общество тума, чи малтан, унăн экономикăллă никĕсĕсене хывма тăрăшатпăр.

Клемент Готвальд иртнĕ çулта чылай çитĕнӳсем тунине палăртать. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, 1951 çулта Чехословаки промышленноçĕ 1950 çулхинчен 12,2 процент ытларах продукци туса кăларнă, унăн хисепĕ 1937 çулхин икĕ виççĕмĕш пайне яхăн нумайрах пулнă. 1951 çулта Словаки промышленноçĕ 1950 çулхинчен 19,2 процент ытларах продукци туса кăларнă, унăн хисепĕ 1937 çулхинчен 3,5 хут яхăн нумайрах пулнă. 1950 çулхипе танлаштарсан, 1951 çулта йывăр промышленность предприятийĕсем 14,3 процент, çăмăл промышленность предприятийĕсем 6 процент, апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем 18,6 процент ытларах продукци туса кăларнă. Çав вăхăтрах Словакире йывăр промышленность предприятийĕсен продукци хисепĕ 36,4 процент, çăмăл промышленноçăн—12,8 процент, апат-çимĕç промышленноçĕн 7 процент ӳснĕ. 1950 çулхипе танлаштарсан, 1951 çулта наци тупăшĕ, 1937 çулхи хакпа шутласан, 10 процент, 1937 çулхинчен 33 процент ытларах пулнă. 1951 çулта халăх хуçалăхне аталантарма 105 миллиард крон укçа панă.

Пирĕн çĕршыв промышленноçĕ мĕнле вăйланса пыни çакăнтан та курăнать: паян, 1952 çула кĕнĕ кун, Кунчицăри çĕнĕ металлурги заводĕнче пĕрремĕш домнăна ĕçе янă, тенĕ малалла Готвальд. Çакă вăл питĕ пысăк металлурги комбиначĕн пĕрремĕш домна кăмаки, ăна чи кĕске вăхăт хушшинче туса пĕтерĕ. Кун хыççăн ытти çĕнĕ домнăсене хăвăрт туса пĕтерĕпĕр. Çакă вара ĕç халăхĕ мĕн тума пултарнине кăтартса парĕ.

Готвальд мĕнпур ĕççыннисен ячĕпе Кунчицăри пĕрремĕш домнăна срокра туса пĕтерсе ĕçе яма хытă тăрăшса, хăйсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕ пиншер рабочисемпе работницăсене саламланă тата тав тунă.

Эпир пурте çапла тума ĕмĕтленсе ырă сунатпăр: çĕр чăмăрĕ çинчи ытти мĕнпур çынсемпе пĕрле мире сыхласа хăвармалла, çапла мирлĕ строительствăна пурнăçласа пыма май килтĕр,—тенĕ юлашкинчен Готвальд.—Пирĕн демократиллĕ халăх республики, Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе тачă союзра тăрса, тата ытларах вăйланса тата чечекленсе пытăр, пирĕн хуçалăх çирĕплентĕр, промышленноçпа ялхуçалăх производстви хăвăрт çĕкленсе пытăр. Çаксене пурнăçлама эпир мĕн тума май килнине пĕтĕмпех туса пырăпăр. Пирĕн çемьесен, пирĕн ачасен, пирĕн хĕрарăмсен тата ача амăшĕсен пурнăçĕ кăçал татах та хаваслăрах, савăнăçлăрах пултăр тесе, эпир хытăрах тăрăшса ĕçлĕпĕр. 1952 çула кĕнĕ ятпа эпĕ сире пурне те ырă сунса çапла калатăп.

Англи Египета хăратать

Робертсон генерал заявленийĕ

ПАРИЖ, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: декабрĕн 31-мĕшĕнче Англин Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи тип çĕр çинчи çарĕсен главнокомандующийĕ Робертсон генерал Англирен таврăннă. Вăл Файида аэродромне ансан, унта заявлени вуласа панă, Англи хăйĕн Суэц каналĕ патĕнчи позицийĕсене сыхласа хăварма пур майсемпе те тăрăшма шутлани çинчен тепĕр хут пĕлтернĕ.

Кун пирки Робертсон: «Пирĕн алăри вăйсем çителĕклĕ, пире ытти çĕршывсем пулăшса тăраççĕ», тенĕ. Çапла каласа, вăл Англи малашне пысăк ĕçсем тума пуçласси çинчен систернĕ.

Робертсон заявленийĕн юлашки пайĕнче: «Пăртак вăхăт иртсен е юнлă тытăçусем хыççăн эпир хамăр политикăна улăштарма ирĕк парăпăр тесе никам та ан шухăшлатăр тата çавăн пек шутланипе ан йăнăштăр», тенĕ. Робертсон—Англи «Суэц каналĕ патĕнче хăйĕн позицине» малашне те, «Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи командовани» текенскерне тăвиччĕнех сыхласа хăварасси çинчен каланă.

Робертсон çав заявление Англи премьер-министрĕ Черчилль хушнă тăрăх туни çинчен пĕлтернĕ.

Египет премьер-министрĕ Нахас-паша тунă заявлени

КАИР, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Пысăк хаçатсем пурте пĕрремĕш страницăсенче Египет премьер-министрĕ Нахас-паша январĕн 1-мĕшĕнче тунă заявление пичетленĕ. Вăл хăйĕн заявленийĕнче Англин Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи çарĕсен главнокомандующийĕ Робертсон декабрĕн 31-мĕшĕнче Фейидăра вуласа панă заявление хирĕç ответленĕ.

«Тăвата держава (США, Англи, Франци тата Турци сĕнĕвне Египет правительстви официальнăй йĕркепе сирсе ячĕ тата вăл акăлчансем Египетран тухса каяччен çавăн пек кирек мĕнле сĕнĕве те пăхса тухма килĕшес çукки çинчен темиçе хутчен те каласа пачĕ,—тенĕ Нахас-паша.—Ку ыйту тĕлĕшпе Египет позицийĕ улшăнман, эпир сирсе янине акăлчансем ирĕксĕрлесе йышăнтарма пултараймĕç. Англи Суэц каналĕ патĕнче çарсем тытса усрани вăл Египетăн никама пăхăнса тăман çĕршыв пулмалли прависене хирĕç кĕретĕнех агрессиллĕ ĕç туни пулать. Англи ку çарсене тĕнчери çĕршывсен шыв çулĕ тăрăх карапсем ирĕклĕн çӳрессине хӳтĕлес шутпа тытса усрани çинчен калать пулсан, ку ĕçе çав сăлтавпа тӳрре кăларма çук. Суэц каналĕ вăл—Египет каналĕ. Çавăнпа ку канал тăрăх карапсем ирĕклĕн çӳрессине хӳтĕлемелли право унăн кăна пур».

Робертсон хăйĕн заявленийĕнче: «акăлчансене хирĕçле ĕç тăваççĕ, эпир çавна хирĕç ответлетпĕр», тенĕ. Çакă вăл «фактсене кĕретĕнех пăсса кăтартни пулать, мĕншĕн тесен акăлчансем—агрессорсем, эпир вĕсем ирĕксĕрленине хирĕç ответлетпĕр, вĕсене хирĕç кĕрешетпĕр». Нахас-паша малалла çапла каланă: «Ку вăл—акăлчансен çĕршывĕ мар, пирĕн çĕршыв, вĕсен ăна хӳтĕлеме çарпа усă курма кирлĕ мар. Çавăнпа та акăлчансем терророла ĕçсем тунă пирки эпир хамăр политикăна улăштарассине шанса, вĕсен хăйсене улталамалла мар. Египет хăйĕн политикин çул-йĕрне палăртрĕ. Çак çулйĕре вăл хăйĕн требованийĕсене пĕтĕмпех ĕçе кĕртиччĕнех тытса пырĕ».

Робертсон генерал заявленийĕ пирки Египет ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнне вăхăтлăха юлнă Фарадж-паша çапла каланă. Робертсон генерал хăйĕн заявленийĕнче вăрçă пуçлассипе хăратни пире шиклентерсе ӳкерме пултараймĕ. Çавăн пек хăратнине хирĕç эпир çине тăрса тата хамăр çĕнтерессине ĕненсе кĕрешĕпĕр.

Фарадж-паша юлашкинчен çапла каланă: «Робертсон генерал тăватă держава сĕнĕвĕсем çинчен асăннă. Ку сĕнӳсене Египета малашне те оккупацилесе тăрас, Англи оккупацилесе тăниччен тĕнчери державăсем оккупацилесе тăмалли йĕрке туса хурас шутпа панă. Ку сĕнӳсене Египет правительстви малтанах çавăн пек хак пачĕ, вĕсен тĕллевĕ чăнахах та çавăн пек пулнине Робертсон ун çинчен асăнни тата ытларах çирĕплетсе кăтартать. Робертсон хăйĕн заявленийĕнче ку сĕнӳсене ирĕксĕрлесе, Египетпа арабсен çĕршывĕсем килĕшмесĕр йышăнтарасси çинчен тепĕр хут калани вара пачах та виревсĕр сăмах».

Англипе Египет хушшинчи ĕçсем

КАИР, январĕн 2-мĕшĕ. «Аль-Джумхур аль-Мысри» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Мусульман çамрăкĕсем» ятлă организаци председателĕ Салех Харб-паша маларах асăннă хаçат корреспондентне: Египет «акăлчансемпе е американецсемпе кирек мĕнле союз туни те Египетшăн хăйне хăй вĕлерни пулать, империалистсемшĕн усăллă çав союза тăвассине хирĕç тӳрĕ кăмăллă кашни патриот кĕрешме тивĕçлĕ», тесе каланă.

Пĕтĕм Корейăри профсоюзсен федерацийĕ Японире корейцсене хĕсĕрленине хирĕç протестлет

ПХЕНЬЯН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Корея хаçачĕсем Пĕтĕм Корейăри профсоюзсен федерацийĕн заявленине пичетленĕ. Заявленире профсоюзсен федерацийĕ Японии правительстви Японире пурăнакан 600 пин корейца хĕсĕрленине хирĕç, вĕсене «Корея республики» гражданĕсем шутланса регистраци тăма хушнине хирĕç протестлет.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Вăтаçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи фронтсенче уйрăмах паллă улшăнусем пулман.

Пын Дэ-хуэй генерал çĕнĕ çул ячĕпе Китай халăх добровольцĕсем патне янă послани

ПЕКИН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корейăри фронтран çапла пĕлтерет:

Паян Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэй хăйĕн офицерĕсемпе салтакĕсем патне çĕнĕ çул ячĕпе послани янă. Унта çапла каланă:

Америка империалисчĕсем 1950 çулхи июнь уйăхĕнче пуçланă агрессиллĕ вăрçă пирĕн тăван çĕршывшăн тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи миршĕн пысăк хăрушлăх туса хучĕ. Çав вăхăтрах Америка агрессорĕсем Тайван утравне тытса илчĕç. Китай халăхĕ тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем Америка агрессорĕсене темиçе хутчен те асăрхаттарчĕç тата питлерĕç пулин те, вĕсем Корея халăхне ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пычĕç тата вĕсен самолечĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорийĕ çине вĕçсе кĕчĕç. Вĕсем вăрçă çулăмне Ялуцзян юханшывĕн çыранĕ таранах сарчĕç, Корейăна тытса илме тата хăйсен агрессине Китайăн материкри территорийĕ çине сарма хăтланчĕç.

Вăрçăра хăйсем пораженисем тӳснине тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес пирки çине тăрса хĕснине пула Америка агрессорĕсен 1951 çулхи июль уйăхĕнче ирĕксĕрех перемири çинчен калаçма килĕшмелле пулчĕ.

Калаçусем пилĕк уйăх ытла пыраççĕ. Калаçусем вăхăтĕнче Америка агрессорĕсем пĕрмаях калаçусене чарса лартас шутпа тĕрлĕ чăрмавсем кăлармалли тактика тытса пыраççĕ тата тĕрлĕ маневрсем тăваççĕ. Вĕсем хăйсем вăрçăра пурнăçлама пултарайман агрессиллĕ тĕллевĕсене калаçусем пынă вăхăтра ĕçе кĕртесшĕн, агрессиллĕ вăрçа малалла тăсма хăйсен агрессиллĕ позицийĕсене сыхласа хăварас шутпа Демократиллĕ Корея Халăх Республикин шалти ĕçĕсене хутшăнмалли йĕрке тутарасшăн пулчĕç. Анчах вĕсен ĕç тухмарĕ. Пирĕн сыхă тăмалла, тăшман политика тата вăрçă енĕпе ирсĕр ĕçсем тума шутланисене малашне те пӳтлантарса лартма хатĕр пулмалла.

Ача амăшĕсемшĕн тăрăшни

ИШЛЕИ. Партипе правительство нумай ача амăшĕсемшĕн тимлĕ тăрăшаççĕ. Кăçал Ишлей районĕнче çĕнĕрен 366 хĕрарăма ытла пособисем памалла тунă. Халĕ районта пурĕ 1.100 хĕрарăм ытла государствăран пособи илсе тăраççĕ. Кăçал вĕсене пĕтĕмпе 715.638 тенкĕ тӳленĕ.

Нумай ача çуратса пăхса ӳстернĕшĕн кăçал 105 хĕрарăма «Ача амăшĕн мухтавĕ» тата «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Яла 200 экземпляр хаçат-журнал килет

Эпĕ Чкаловски районĕнчи Еншик ялĕнче почтальон пулса ĕçлетĕп. 1952 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарма тытăннăранпа ырми-канми ĕçлерĕмĕр. Ял çыннисем кăçал нихçанхинчен ытларах хаçат-журнал çырăнса илчĕç. Çĕнĕ çулта 170 киле 200 экземпляр хаçат-журнал килсе тăма тытăнчĕ. Эпĕ 1952 çулшăн 4.000 тенкĕлĕх хаçат-журнал сартăм.

Хаçат-журналсемпе çырусене килнĕ кунах валеçсе паратăп, хамăр районти ытти почтальонсене те ман пек ĕçлеме чĕнетĕп.

Н. ПОЛЯКОВ.

Пĕлтерни

Январĕн 4-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» первоисточниксем тăрăх вĕренмелли кружоксен руководителĕсем валли семинар пулать. Тема: «Большевиксен партийĕн теориллĕ никĕсĕсем çинчен».

Руководитель—И. М. Михайлов юлташ.

ВКП(б) хула комитечĕ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-01, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00302 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.